25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
НОЯБРЬ
7
ШАМАТКУН
261 (6196) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Октябрьти социализмлă Аслă революци XXV çул тултарни

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. СТАЛИН юлташ Ĕçсынни Депутачĕсен Мускав Совечĕн Мускав хулинчи партиллĕ тата обществăллă организацисемпе пĕрле 1942 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче пулнă чаплă ларăвĕнче тунă доклад

ЮЛТАШСЕМ!

Паян эпир хамăрăн çĕршывра советла революци çĕнтернĕренпе XXV çул тултарнине уявласа ирттеретпĕр. Пирĕн патра Совет стройĕ пулса тăнăранпа 25 çул иртрĕ. Эпир килес çул умĕнче, Совет стройĕ пулнă хыççăнхи 26-мĕш çул умĕнче тăратпăр.

Октябрьти советла революцин уявĕ ячĕпе пулакан чаплă ларусенче яланах государствăн тата партин органĕсем иртнĕ çулта тунă ĕçсен итогĕсене туса ирттерме йышăннă. Мана шăпах ĕнтĕ иртнĕ çулти—пĕлтĕрхи ноябрьтен пуçласа кăçалхи ноябрьченхи—итогсем çинчен сире отчетлă доклад туса пама хушнă.

Пирĕн государствăн тата парти органĕсен ĕçĕ иртнĕ тапхăрта икĕ енĕпе пулса пычĕ: пĕр енчен, мирлĕ строительство енĕпе тата пирĕн фронт валли çирĕп тыл организацилес енĕпе, тепĕр енчен, Хĕрлĕ Çарăн оборонăллă тата наступлениллĕ ĕçĕсене туса ирттерес енĕпе пулса пычĕ.

1. Тылри организаторла ĕç

Пирĕн ертсе пыракан оргăнсен мирлĕ строительствăри ĕçĕ иртнĕ тапхăр хушшинче пирĕн çар промышленноçĕн, çавăн пекех тата граждăнла промышленноçăн никĕсне хамăрăн çĕршывăн хĕвелтухăç районĕсене куçарнинче пулчĕ, рабочисене тата предприятисен оборудованийĕсене çĕнĕ вырăна куçарса йĕркелесе янинче, акăнакан çĕр лаптăкне ÿстерсе пынинче тата хĕвелтухăçĕнче кĕрхи тырăсен лаптăкне ÿстернинче пулчĕ, юлашкинчен тата фронтшăн ĕçлекен пирĕн предприятисен ĕçне тĕпренех лайăхлатнинче тата тылра, — заводсенче те, çавăн пекех колхозсемпе совхозсенче те,—ĕç дисциплинине çирĕплетнинче пулчĕ. Калас пулать, çакă вăл пирĕн хуçалăхлă тата административнăй наркоматсемшĕн, вăл шутрах—пирĕн чугунçул транспорчĕшĕн те,—анлă ĕç, питех те йывăр тата питех те кăткăс организаторла ĕç пулчĕ. Çапах та йывăрлăхсене çĕнтерме май килчĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн заводсем, колхозсемпе совхозсем, вăрçă вăхăтĕнчи мĕнпур йывăрлăхсене пăхмасăр, çителĕклĕ ĕçлесе пыраççĕ, кун пирки иккĕленмелли çук. Пирĕн çар завочĕсем тата вĕсене пулăшса тăракан предприятисем, тÿрĕ кăмăлпа тата тĕрĕс-тĕкĕл ĕçлесе, Хĕрлĕ Çара орудисем, минометсем, самолетсем, танксем, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем парса тăраççĕ. Пирĕн колхозсемпе совхозсем те, тÿрĕ кăмăлпа та тĕрĕс-тĕкĕл ĕçлесе, халăхпа Хĕрлĕ Çара продовольстви, пирĕн промышленноçа вара чĕртавар парса тăраççĕ. Йышăнас пулать, пирĕн çĕршывăн çакăн пек çирĕп те организованнăй тыл халиччен нихăçан та пулман-ха.

Çак организаторла тата строительствăри пĕтĕм йывăр ĕçе туса пынине пула пирĕн çĕршыв кăна мар, тата тылри çынсем хăйсем те улшăнса çĕнелчĕç. Çынсем типтерлĕрех, хастарлăрах, дисциплинăллăрах пулса тăчĕç, вăрçă ыйтнă пек ĕçлеме вĕренчĕç, хăйсен Тăван çĕршыв умĕнчи тата ăна хÿтĕлекенсем умĕнчи — Хĕрлĕ Çар умĕнчи хăйсен тивĕçне ăнланса илме тытăнчĕç. Хăйсен граждăнла тивĕçне ăнланман çынсем, çапкаланчăк та сÿрĕк çынсем тылра сахалланнăçемĕн сахалланса пыраççĕ. Хăйсен граждăнла тивĕçне ăнланакан çынсен организованноçĕпе дисциплини çирĕпленнĕçемĕн çирĕпленсе пырать.

Анчах, эпĕ каларăм ĕнтĕ, иртнĕ çул, мирлĕ строительство çулĕ кăна мар пулса тăрать, вăл унпа пĕрлех тата пирĕн мире юратакан çĕршыв çине ултавлăн та ирсĕррĕн тапăннă нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă çулталăкĕ те пулса тăрать.

2. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри вăрçă ĕçĕсем

Пирĕн ертсе пыракан оргăнсен вăрçă тĕлĕшĕнчи ĕçне илсен, вăл нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç Хĕрлĕ Çар наступлениллĕ тата оборонăллă операцисем туса пыни пулчĕ. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи иртнĕ çулхи вăрçă ĕçĕсене икĕ тапхăра уйăрма пулать: пĕрремĕш тапхăр, пуринчен ытларах хĕллехи тапхăр; унчухне Хĕрлĕ Çар нимĕçсем Мускава атакăланине сирсе пăрахрĕ, пуçарулăха хăйĕн аллине илчĕ, наступление куçрĕ, нимĕçсен войскисене хăваласа ячĕ тата тăватă уйăх хушшинче вырăнĕ-вырăнĕпе 400 километр ытла малалла кайрĕ; иккĕмĕш тапхăр вăл—çуллахи тапхăр; унчухне нимĕçсен фашистла войскисем, Европăра иккĕмĕш фронт çуккипе усă курса, хăйсен мĕнпур ирĕклĕ резервĕсене пухрĕç те кăнтăр-хĕвеланăç енче фронта татса кĕчĕç, вара пуçарулăха хăйсен аллине илсе пилĕк уйăх хушшинче вырăнĕ-вырăнĕпе 500 километра çити малалла куçрĕç.

Пĕрремĕш тапхăрти вăрçă ĕçĕсем, уйрăмăнах Хĕрлĕ Çарăн Ростов, Тула, Калуга районĕсенчи, Мускав патĕнчи, Тихвин тата Ленинград патĕнчи ăнăçлă ĕçĕсем—икĕ паха факта уçса пачĕç. Вĕсем, пĕрремĕшĕнчен, Хĕрлĕ Çар тата унăн çапăçури кадрĕсем ÿссе пысăк вăй пулса тăнине, нимĕçсен фашистла войскисем хĕссе килнине хирĕç тăма кăна мар, çавăн пекех тата вĕсене хирĕç тÿррĕн тăрса çапăçса, çапса аркатма та, вĕсене каялла хăваласа яма та пултаракан пысăк вăй пулса тăнине кăтартса пачĕç. Иккĕмĕшĕнчен, вĕсем, нимĕçсен фашистла войскисен, вĕсем темĕнле çирĕп тăраççĕ пулин те, пысăк çитменлĕхсем пуррине, çав çитменлĕхсем, Хĕрлĕ Çаршăн хăшпĕр майлă условисем килсе тухсан, нимĕç войскисене поражени патне илсе çитерме пултарассине кăтартса пачĕç. Çак фактăн ăнсăртран пулнă тесе шутламалла мар: мĕнпур Европа тăрăх триумфлă маршпа утса тухнă нимĕç войскисем, французсен войскисене пĕрре çапсах хуçса актарнăскерсем, чи лайăх войскăсем вырăнĕнче шутланнăскерсем, вăрçăри чăнчăн отпорпа пирĕн çĕршывра кăна тĕл пулчĕç, вĕсем отпорпа тĕл пулчĕç кăна мар, çав вăхăтрах Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе вĕсен хăйсем йышăннă позицисенчен 400 километр ытла каялла чакма лекрĕ, çавăн пек чакнă чухне çул çинче орудисемпе машинăсене, боеприпассене питĕ нумай пăрахса хăварма лекрĕ. Çак факта вăрçăн хĕллехи условийĕсемпе çеç ниепле те ăнлантарса пама çук.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри вăрçă ĕçĕсен иккĕмĕш тапхăрĕ ĕç нимĕçсемшĕн усăллă пулса улшăннипе, пуçарулăх нимĕçсен аллине куçнипе, пирĕн фронта кăнтăр-хĕвеланăç енче татса кĕнипе, нимĕçсен войскисем малалла куçнипе тата вĕсем Воронеж, Сталинград, Новороссийск, Пятигорск, Моздок районĕсене тухнипе паларса тăрать. Европăра иккĕмĕш фронт çуккипе усă курса, нимĕçсемпе вĕсен союзникĕсем фронта хăйсен мĕнпур ирĕклĕ резервĕсене хăваласа кĕртрĕç те вĕсене пĕр еннелле, кăнтăр-хĕвеланăç еннелле ярса, кунта хăйсен вăйĕсене нумай ытларах пухса тăратрĕç тата тактика тĕлĕшĕнчен чылай ăнăçу тума пултарчĕç.

Нимĕçсем иртнĕ çура малтанхи уйăхсенче наступлени туса пынă пек, пĕр вăхăтрах виç еннелле те, кăнтăралла та, çурçĕрелле те, централла та, наступлени туса пыма çавтери вăйлах мар пулас, анчах вĕсем халĕ пĕр-пĕр тĕлте пĕр еннелле вăйлă наступлени организацилеме çителĕклĕ таранах вăйлă-ха.

Пирĕн фронтра хăйсен çуллахи наступленине пуçласа ярса, нимĕçсен фашистла стратегĕсем мĕнле тĕп тĕллев лартнă-ха? Ютçĕршывсенчи пичет, çав шутрах нимĕçсен пичечĕ те, çырни тăрăх пăхсан, наступленин тĕп тĕллевĕ Грознăйпа Бакури нефть районĕсене йышăнса илесси пулса тăнă. Анчах та çакăн пек шухăшланине фактсем татăклăнах сирсе яраççĕ. Фактсем çакăн çинчен калаççĕ: нимĕçсем ССР Союзĕн нефть районĕсене куçса пырасси тĕп тĕллев мар, пулăшакан тĕллев кăна пулса тăрать.

Апла пулсан, нимĕçсен наступленийĕн тĕп тĕллевĕ мĕнре пулнă-ха? Вăл Мускава хĕвелтухăçĕнчен кайса çавăрса илессинче, ăна Атăлпа Урал тылĕсенчен кайса татса илессинче, унтан вара Мускава пырса çапассинче пулса тăнă. Нимĕçсем кăнтăралла, нефть районĕсенелле куçса пынă чухне хăйсен умне пуринчен ытларах нефть районĕсене йышăнса илессине мар, пирĕн тĕп резервсене кăнтăралла куçарттарассине, çапла вара, Мускав çине пырса çапнă чухне ăнăçу тăвас шутпа, Мускав фронтне вăйсăрлатассине лартнă. Нимĕç войскисен тĕп вăйĕсем халĕ кăнтăрта мар, Орел тата Сталинград районĕсенче пухăнса тăнине çакăнпа ăнлантарса памалла та ĕнтĕ.

Нумаях та пулмасть пирĕн çынсен аллине Германи генштабĕн пĕр офицерĕ лекнĕ. Çак офицер çумĕнче нимĕç войскисем хăш вăхăтра мĕнле куçса пымалли плана кăтартса панă карттăна тупнă. Çак документран акă мĕн курăнать: нимĕçсем Борисоглебскра кăçалхи июлĕн 10-мĕшĕнче, Сталинградра—июлĕн 25-мĕшĕнче, Саратовра—августăн 10-мĕшĕнче, Куйбышевра—августăн 15-мĕшĕнче, Арзамасра—сентябрĕн 10-мĕшĕнче, Бакура—сентябрĕн 25-мĕшĕнче пулма ĕмĕтленнĕ.

Нимĕçсен çуллахи наступленийĕн тĕп тĕллевĕ—Мускава хĕвелтухăç енчен çавăрса илсе ăна пырса çапасси пулнă, кăнтăралла куçса пынин тĕллевĕ вара, ыттисемсĕр пуçне, пирĕн резервсене Мускавран аякалла илĕртсе каясси тата Мускав фронтне вăйсăрлатасси, çапла вара Мускава пырса çапас ĕçе çăмăллатасси пулнă. Пирĕн çак даннăйсене çÿлте асăннă документ пĕтĕмĕшпех çирĕплетсе парать.

Кĕскен каласан, нимĕçсен çуллахи наступленийĕн тĕп тĕллевĕ—Мускава çавăрса илесси тата кăçал вăрçа вĕçлесси пулнă.

Иртнĕ çулти ноябрьте нимĕçсем Мускава тÿрех пырса çапса ăна илме, Хĕрлĕ Çара ирĕксĕрех парăнтарма тата, çапла вара, хĕвелтухăçĕнчи вăрçа вĕçлеме шутланă. Çак иллюзисемпе вĕсем хăйсен салтакĕсене тăрантарнă. Анчах, паллă ĕнтĕ, нимĕçсен çак ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕреймерĕç. Пĕлтĕр Мускава тÿрех пырса çапма хăтланса пиçсе кайнă хыççăн, нимĕçсем Мускава кăçал аякран çавăрса илме тата, çапла вара, Хĕвелтухăçĕнчи вăрçа вĕçлеме шут тытнă. Çак иллюзисемпе вĕсем халĕ хăйсен ухмаха ертнĕ салтакĕсене тăрантараççĕ. Паллă ĕнтĕ, нимĕçсен çак ĕмĕчĕсем те пурнăçа кĕреймерĕç. Çавна пула, икĕ мулкача хăваласа — нефтьшĕн те, Мускава çавăрса илессишĕн те çунса, нимĕçсен фашистла стратегĕсем йывăр положенине кĕрсе ÿкрĕç.

Çапла вара, нимĕçсен çуллахи наступленийĕн тактикăллă ăнăçăвĕсем вĕсен стратегиллĕ планĕсем чăнлăхпа нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăман пирки вĕçленеймерĕç.

3. Европăри иккĕмĕш фронт пирки тăракан ыйту

Нимĕçсем çапах та кăçал вăрçă ĕçĕсенче пуçарулăха хăйсен аллине илме тата пирĕн фронтра тактикăллă пысăк ăнăçусем тума пултарнине мĕнпе ăнлантарса памалла-ха?

Çак факта акă мĕнпе ăнлантарса памалла: нимĕçсене тата вĕсен союзникĕсене хăйсен пĕтĕм ирĕклĕ резервĕсене пухма, вĕсене Хĕвелтухăç фронтне яма тата вăрçăн пĕр участокĕнче пирĕннинчен йышлăрах вăй пухса тăратма май килчĕ. Иккĕленмелли çук, нимĕçсем çак мероприятисене туса ирттермен пулсан, пирĕн фронтра ăнăçусем тума пултарайман пулĕччĕç.

Анчах мĕншĕн нимĕçсене хăйсен пĕтĕм резервĕсене пухса вĕсене Хĕвелтухăç фронтне яма май килчĕ? Мĕншĕн тесен Европăра иккĕмĕш фронт пулманни вĕсене çак операцие хăйсемшĕн нимĕнле хăрушлăхсăр туса ирттерме май пачĕ.

Çапла ĕнтĕ, нимĕçсем кăçал пирĕн фронтра тунă тактикăллă ăнăçусен тĕп сăлтавĕ—Европăра иккĕмĕш фронт пулманни вĕсене хăйсен мĕнпур ирĕклĕ резервĕсене пирĕн фронта яма тата кăнтăр-хĕвеланăç енче пирĕннинчен йышлăрах вăйсем пухса тăратма май килнинче пулать.

Калăпăр, Европăра пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче пулнă пек иккĕмĕш фронт пур тейĕпĕр, çав иккĕмĕш фронт нимĕçсен 60 дивизине тата Германи союзникĕсен 20 дивизине хăй еннелле туртса илнĕ, тейĕпĕр. Нимĕç войскисен пирĕн фронтри лару тăрăвĕ мĕнле пулнă пулĕччĕ? Ăнланса илме йывăрах мар, вĕсен лару-тăрăвĕ хурлăхлă пулнă пулĕччĕ. Унтан та ытларах, çакă вăл нимĕçсен фашистла войскисем пĕтсе лармa тытăнни пулнă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен ун пек пулнă пулсан, Хĕрлĕ Çар хăй халĕ тăнă çĕрте мар, ăçта та пулин Псков, Минск, Житомир, Одесса патĕнче тăнă пулĕччĕ. Çакă вăл акă мĕне пĕлтерет: кăçалхи çу вăхăтĕнчех ĕнтĕ нимĕçсен фашистла çарĕ хăйĕн катастрофи умĕнче тăнă пулĕччĕ. Çакă пулмарĕ пулсан вара, вăл нимĕçсене Европăра иккĕмĕш фронт çукки çăлса хăварнă пирки пулмарĕ.

Европăри иккĕмĕш фронтăн ыйтăвне истори тĕлĕшĕнчен илсе пăхар.

Тĕнчери пĕрремĕш вăрçăра Германин икĕ фронтра, хĕвеланăçĕнче, пуринчен ытларах Англипе Франци хирĕç, тата хĕвелтухăçĕнче—вырăс войскисене хирĕç вăрçма лекнĕ. Апла пулсан, тĕнчери пĕрремĕш вăрçăра Германие хирĕç иккĕмĕш фронт пулнă. Германин унчухне пулнă 220 дивизирен вырăссен фронтĕнче нимĕçсен 85 дивизийĕнчен ытла мар тăнă. Кун çумне Германи союзникĕсен вырăссен фронтне хирĕç тăнă войскисене хушсан, уйрăмăн, Австрипе Венгрин 37 дивизине, Болгарин 2 дивизине тата Турцин 3 дивизине хушсан, пĕтĕмпе çакă вăл вырăссен войскисене хирĕç 123 дивизи пулать. Германипе унăн союзникĕсен ытти дивизийĕсем, пуринчен ытларах, Англипе Франци войскисене хирĕç фронт тытнă, вĕсенчен пĕр пайĕ Европăри оккупациленĕ территорисем çинче гарнизонри службăра тăнă.

Çапла пулнă ĕç тĕнчери пĕрремĕш вăрçăра.

Халĕ, тĕнчери иккĕмĕш вăрçăра, калăпăр, кăçалхи сентябрь уйăхĕнче, ĕç мĕнле тăрать-ха?

Нимĕнле иккĕленÿ те кÿмен, тĕрĕслене даннăйсем тăрăх, Германин хальхи пур 256 дивизийĕнчен пирĕн фронтра 179 дивизирен кая мар тăрать. Кун çумне Румынин 22 дивизине, Финляндин 14 дивизине, Италин 10 дивизине, Венгрин 13 дивизине, Словакин пĕр дивизине тата Испанин пĕр дивизине хушсан, пирĕн фронтра çапăçакан дивизисем пĕтĕмпе 240 пулаççĕ. Нимĕçсен тата вĕсен союзникĕсен ытти дивизийĕсем оккупациленĕ çĕршывсенче (Францире, Бельгире, Норвегире, Голландире, Югославире, Польшăра, Чехословакире тата ытти çĕрте те) гарнизонри службăра тăраççĕ, вĕсенчен пĕр пайĕ Англие хирĕç Ливире Египетшăн çапăçать, çав вăхăтрах Ливири фронт хăй енче пĕтĕмпе те нимĕçсен 4 дивизине тата итальянецсен 11 дивизине кăна тытса тăратать.

Çапла ĕнтĕ, тĕнчери пĕрремĕш вăрçăра 127 дивизи пулни вырăнне, пирĕн фронта хирĕç 240 дивизирен кая мар тăраççĕ, нимĕçсен 85 дивизийĕ вырăнне халĕ нимĕçсен Хĕрлĕ Çара хирĕç 179 дивизийĕ çапăçать.

Нимĕçсен фашистла войскисем пирĕн фронтра кăçалхи çул çулла тактикăллă ăнăçусем тунин тĕп сăлтавĕпе никĕсĕ çакăнта пулса тăрать те ĕнтĕ.

Нимĕçсем пирĕн çĕршыв çине килсе тапăннине час-часах Наполеон Росси çине тапăннипе танлаштараççĕ. Анчах çакăн пек танлаштарни критикăна тÿсме пултараймасть. Российăна килнĕ 600 пин çынлă войскăран Наполеон Бородино патне аран-аран çеç 130—140 пин çын илсе çитернĕ. Мускав патĕнче вăл çак вăйпа кăна çапăçма пултарнă. Халĕ вара Хĕрлĕ Çар фрончĕ умĕнче 3 миллион ытла войскăсем тăраççĕ, вĕсем кучухнехи вăрçăн пур хатĕрĕсемпе те хĕçпăшалланнă. Мĕнле танлаштару пулма пултарать-ха кунта?

Нимĕçсем пирĕн çĕршыв çине килсе тапăннине хăшпĕр чухне çавăн пекех тата Германи Росси çине пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă тапхăрĕнче килсе тапăннипе танлаштараççĕ. Анчах çакăн пек танлаштарни те критикăна тÿсме пултараймасть. Пĕрремĕшĕнчен, пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче Европăра иккĕмĕш фронт пулнă, вăл нимĕçсен лару-тăруне питех те йывăрлатнă, хальхи вăрçă тапхăрĕнче вара Европăра иккĕмĕш фронт çук. Иккĕмĕшĕнчен, хальхи вăрçăра пирĕн фронта хирĕç пĕтĕм тĕнчери вăрçă вăхăтĕнчипе танлаштарсан икĕ хут йышлăрах войскăсем тăраççĕ. Паллах ĕнтĕ, кунта танлаштару пулма пултараймасть.

Хĕрлĕ Çар умĕнче тăракан йывăрлăхсем мĕнле пысăк та хăрушă пулнине, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç ирĕклĕхшĕн пыракан вăрçăра Хĕрлĕ Çар кăтартакан паттăрлăх мĕнле пысăк пулнине халĕ ĕнтĕ эсир ăнланса илме пултаратăр.

Нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсен тата вĕсен союзникĕсен урса кайнă бандисем çавăн пек хĕснине урăх нимĕнле çĕршыв та, нимĕнле çар та тÿссе ирттереймен пулĕччĕ, тесе шутлатăп эпĕ. Пирĕн советла çĕршыв кăна, пирĕн Хĕрлĕ Çар кăна çавăн пек хĕснине тÿссе ирттерме пултарать (ТĂВĂЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ). Тÿссе ирттерме кăна та мар, ăна çĕнтерме те пултарать.

Час часах ыйтаççĕ: çапах та Европăра иккĕмĕш фронт пулать-и, теççĕ. Çапла, пулать, паян е ыран, анчах пулать. Вăл пире кирлĕ пирки кăна мар пулать, тата, пуринчен малтан, вăл пирĕн союзниксене пире кирлĕ пулнинчен кая мар кирлĕ пирки пулать. Пирĕн союзниксем çакна ăнланмасăр тăма пултараймаççĕ: Франци стройран тухнă хыççăн фашистла Германие хирĕç иккĕмĕш фронт çукки ирĕклĕхе юратакан çĕршывсемшĕн, вăл шутрах—союзниксемшĕн хăйсемшĕн те, начаррăн вĕçленме пултарать.

4. ССР Союзĕн, Англин, США-н гитлерла Германие тата унăн Европăри союзникĕсене хирĕçле боевой союзĕ

Халĕ ĕнтĕ çакăн пирки иккĕленмелли çук тесе шутлама пулать: гитлерла Германи халăхсене туртса кĕртнĕ вăрçă пынă май, вăйсем тĕпренех пайланса уйăрălса тăчĕç, пĕр-пĕрипе хирĕçле икĕ лагерь пулса тăчĕ: Италипе Германи коалицийĕн тата Англипе Совет Союзĕ, Америка коалицийĕн лагерĕсем.

Çавăн пекех иккĕленмелли çук: çавă пĕр-пĕрне хирĕçле коалицисем пĕр пĕрне хирĕçле икĕ тĕрлĕ ĕç программи тытса пыраççĕ.

Италипе Германи коалицийĕн программинче çакнашкал пунктсене палăртмалла: расăсем çине кураймасăр пăхни; «суйласа илнĕ» нацисем пуç пулса тăрасси; ытти нацисене çĕнтерсе вĕсен территорийĕсене тытса илесси, парăнтарнă нацисене экономика тĕлĕшĕнчен пусмăрлăха кĕртсе ÿкересси тата вĕсен нациллĕ пуянлăхĕсене çаратса пĕтересси; демократиллĕ ирĕклĕхсене пĕтерсе тăкасси; пур çĕрте те гитлерла режим туса хурасси.

Англипе Совет Союзĕ тата Америка коалицийĕн ĕç программи: расăсем уйăрălса

Юлашки 4-мĕш страницăра

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕ, унăн никама пăхăнманлăхĕ!

Социализмлă ялхуçалăхĕн пĕтĕм вăйне — тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çĕре

Нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче чăваш республикинчи колхозсем, колхозницăсем хăйсен пĕтĕм ĕçне фронт интересĕсем ыйтнă пек урăхлатса лайăхлатрĕç. Сталин юлташăн приказне пурнăçласа, колхозсем фронтпа тăван çĕршыва тырă, аш-какай, сĕт-çу, промышленность валли чĕртавар ытлăнçитлĕн туса парас задачăна пурнăçлассишĕн кĕрешрĕç. Тăван çĕршывăн пурнăçĕпе ирĕклĕхĕшĕн пыракан аслă çапăçура колхозниксемпе колхозницăсем хăйсене тивĕçлĕ вырăна йышăнчĕç.

Вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек тырпул туса илессишĕн хĕрӳллĕн кĕрешсе, колхозсем кăçал паха çитĕнӳсем турĕç. Суракине агротехникăллă кĕске срокра туса ирттернĕ, çурхи тырăсене республика кăçал планпа пăхнинчен 9 пин гектар ытларах акса тунă. Ялхуçалăх çуркуннехи ĕçĕсене Хĕрлĕ Чутай, Калинински, Вăрмар, Элĕк тата ытти районсенчи колхозсем пысăк хастарлăхпа туса пычĕç, ку районсем çурхи тырăсене планпа палăртнинчен чылай нумайрах акса ӳстерчĕç.

Тухăçлă тырпул пухса кĕчĕç кăçал пирĕн колхозсем. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçĕн ăнăçлăхĕ ăна лайăх хатĕрленсе çитсе йĕркеллĕн тума пуçăннинчен килнине колхозсенче малтанах ăнланчĕç. Ялхуçалăх машинисене вăхăтра ремонтларĕç, транспорт инвентарĕсене йĕркене кĕртрĕç, ĕç вăйне кирлĕ пек вырнаçтарчĕç, ĕçе çирĕп плансем тăрăх тума тытăнчĕç. Республикăри машинно-тракторнăй станцисем те тракторсемпе комбайнсене вăхăтра юсаса ĕçе кăларчĕç.

Вăрçă чылай колхозниксене вăхăтлăха ялхуçалăх ĕçĕнчен уйăрчĕ. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме кайнă арçынсем вырăнне хĕрарăмсем, çамрăксем тăчĕç. Тракторпа, комбайнсемпе тата сложнăй молотилкăсемпе ĕçлеме çĕршер çынна çĕнĕрен вĕрентнĕ. Çĕнĕ кадрсем ялхуçалăх техникине çирĕп алла илчĕç, тырпулсене пухса кĕртес ĕçе пысăк çĕкленӳпе тухрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем уборкăра кăçал нихăçанхи пек мар пысăк çĕкленӳпе ĕçлерĕç. Тырăсене вырса пухас, кĕлтесене капана хывас ĕçсене чылай районсем партипе правительство кăтартса панă срокра пурнăçларĕç.

Республикăн машинно-тракторнăй станцийĕсем вăрçă вăхăтĕнчи тухăçлă тырпула пухса кĕртес ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç. Республикипе илсен, тырăсене комбайнсемпе вырмалли плана кăçал 128,7 процент пурнăçланă. Тырăсене комбайнсемпе вырас тĕлĕшпе Çĕмĕрле, Элĕк, Комсомольски МТС-сем кăтартуллăн ĕçлерĕç. Çĕмĕрле МТС-ĕнчи комбайнерсем тырăсене комбайнсемпе вырмалли плана 243 процент тултарнă. Тырăсене комбайнсемпе вырса пухмалли плана республикăри 52 МТС-ран 21-шĕ ăнăçлăн тултарнă. Уйрăм комбайнер-стахановецсем уборкăра фронтри пек ĕçлерĕç. Комсомольски МТС-ăн комбайнерĕ Иштяков юлташ кăçал 400 гектар тырă вырса пухнă, 220 килограмм бензин перекетленĕ. Шăмăршă МТС-ĕн комбайнерĕ Фадеев юлташ «Коммунар» комбайнпа 620 гектар тырă вырса пухнă, çунтармалли япалана 200 килограмм перекетлесе хăварнă. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Элĕк, Вăрнар, Йĕпреç Ишлей, Канаш, Комсомольски, Елчĕк, Тăвай, Хĕрлĕ Чутай, Вăрмар, Шăхасан машинно-тракторнăй станцийĕсем тракторсемпе тумалли ĕçсен 1942 çулти планне срокчен пурнăçларĕç.

Чăваш республики кăçал тырпулсене начар мар пуçтарса кĕртрĕ. Уборка ĕçĕсен хăвăртлăхĕ иртнĕ çулхипе танлаштарсан чылай пысăкрах пулчĕ. Кĕлтесене капана хывса çитерне, авăн çапас ĕç те хăшпĕр районсенче вĕçне çитсе пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем ялхуçалăхĕнчи ĕçсене хăвăртрах вĕçлессишĕн, государство умĕнчи обязательствăсене парса татассишĕн хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. Шупашкар районĕнчи колхозсем натуроплатăна тата Хĕрлĕ Çар фондне хывмалли тырра тӳлесе татнă.

Республикăри колхозсенче ноябрĕн 1-мĕшпе 7-мĕшĕ хушшинче кĕрхи çĕртме туса пĕтерессишĕн фронтри пек ĕçлемелли эрне пулса иртрĕ. Çак эрне хушшинче кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре колхозсем пысăк ӳсĕм турĕç. Паянхи куна республика кĕрхи çĕртме планне туллимар даннăйсем тăрăх 80 процента яхăн пурнăçланă.

Октябрьти социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнă аслă уява республикăри нумай колхозсем ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вĕçленипе кĕтсе илчĕç. Уяв умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, чылай колхозсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене срокчен пурнăçларĕç. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăри 130 колхоз кĕрхи çĕртме туса, 163 колхоз авăн çапса пĕтернĕ. Государство умĕнчи обязательствăсене парса татмалла.

Ялхуçалăхĕнчи ĕçсем вĕçленсе пынă май, кашни колхозрах çулталăкри ĕçсен отчетне тăвас, колхозăн пурлăхне инвентаризацилес ĕçсене тума хатĕрленмелле. Ялхуçалăхĕнчи ĕçсене ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн ялхуçалăх машинисене типтерлĕн пуçтарса юсаса хумалла. Çитес çулти çуракине хатĕрленме тытăнмалла.

И. ШОРНИКОВ.

ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр

Пирĕн Кĕçĕн Чуллăри «Победа» колхоз членĕсем кăçал пĕтĕм ĕçе фронт ыйтнă пек хастарлăн туса пычĕç. Колхоз вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ, ăна чи кĕске срокра пĕр тăккаламасăр пухса кĕртрĕ. Вăтам шутпа кашни гектартан 15-шер центнер тĕштырă, 700-шер пăт çĕрулми тата тухăçлă пахча-çимĕç пухса илтĕмĕр.

Кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе, суперфосфатпа тата тислĕкпе апатлантарнă участоксенче урпа 16-шар центнер, пăрçа 16,2 центнер тухрĕ, икĕ гектар çинче 8.000 çурăм кантăр сӳсĕ тата 158 пăт вăрă туса илтĕмĕр. Кусемсĕр пуçне колхоз кăçал 3 тонна сухан, 20.371 штука хăяр туса илчĕ, килес çул валли 1 центнер сухан, çур центнер хăяр вăрлăхĕсем туса хатĕрлерĕ.

Кăçал эпир кĕртыррисене 7 кун хушшинче вырса кĕртрĕмĕр, 6 кун хушшинче ăна çапса илтĕмĕр, çуртыррисене 8 кун хушшинче вырса пухрăмăр. Пĕтĕм тырпула 22 кун хушшинче çапса илсе амбарсене кĕртрĕмĕр.

Колхозниксем лайăх ĕçленине пула, колхоз государство умĕнчи пур парăмсене те сентябрь уйăхĕнчех парса татрĕ, кĕрхи çĕртме тумалли плана ăнăçлăн пурнăçларĕ. Халĕ колхоз пайланман фондсене уйăрса хучĕ, килес çулта акмалли вăрлăхлăх тырра сортлама тытăнчĕ. Стахановла ĕçĕн тухăçĕ пысăк. Колхозниксем кăçал ĕçкунĕ çине 3-шер килограмм тырă, нумай пахча-çимĕç илеççĕ. Çак кунсенче колхоз колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх аванс валеççе пачĕ. Стахановец-колхозниксем аванс шучĕпе кăна 40—50-шар пăт тĕштырă илеççĕ. 16 çулти çамрăк колхозник П. И. Андреев хăй кăна кăçал 33 пăт ытла тĕштырă илмелĕх ĕçленĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар боецĕсене вăйлă пулăшу парса тăраççĕ. Çак уйăхсенче вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли вуншар килограмм çăм, тир, ăшă тумтирсемпе алшиш-чăлхасем нумай пухса пачĕç. Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 4.000 тенкĕ пухрĕç. Колхозниксен фронтпа тăван Хĕрлĕ Çара пулăшас шухăш-кăмălĕ пысăк, ăна вĕсем куллен ĕçпе çирĕплетсе пыраççĕ. Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулассине çирĕп шанса тăратпăр. Уншăн малашне те куллен хĕрӳллĕн ĕçлеме пулатпăр.

Н. ФЕДОРОВ,

Красноармейски районри «Победа» колхоз председателĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сылтăмран сулахаялла): **Н. К. Гавриков** юлташ — Канаш вокзалĕн начальникĕ. Вăл ертсе пыракан вокзал Хусан чугунçулĕ çинче лайăх ĕçлекен вокзал шутланать; **Л. Згурская** юлташ—Канаш вокзалĕн начальник заместителĕ, вăлах вокзалти ВЛКСМ пуçламĕш организацийĕн секретарĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Совет Союзĕн Геройĕсем—пирĕн земляксем (сулахайран сылтăмалла): батальоннăй комиссар **Б. М. Васильев**, капитан **М. Е. Ефимов** тата кĕçĕн лейтенант **Г. Г. Габайдуллин** юлташсем.

Чăваш халăхĕн ывăлĕсем отечественнăй вăрçă фрончĕсенче

Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă уява кăçал эпир тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн пыракан отечественнăй вăрçăн хаяр та йывăр кунĕсенче кĕтсе илетпĕр.

Иккĕмĕш çул ĕнтĕ нимĕç фашисчĕсем пирĕн ялсемпе хуласене, шкулсемпе пурăнмалли çуртсене çĕмĕрсе ишĕлтереççĕ, пирĕн халăхăн пурлăхне çаратаççĕ, совет çыннисене, айăпсăр ачасемпе хĕрарăмсене тискеррĕн пусмăрласа асаплантараççĕ.

Йывăр кунсенче пурăнать пирĕн çĕршыв. Фашистсем Сталинграда тытса илесшĕн, Кавказ патнелле туртăнаççĕ. Гитлеровецсем Совет Кăнтăрне татса илесшĕн, пире нефтьсĕр, тырăсăр хăварасшăн. Пысăк хăрушлăх умĕнче тăрать пирĕн Совет çĕршывĕ.

Хĕрлĕ Çар çак йывăр çапăçура тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене пинĕпинĕпе пĕтерсе пырать.

Совет Союзĕ Гитлер оккупанчĕсене хирĕç вăрçакан отечественнăй вăрçă вут-хĕмĕнче кунсерен пиншер хĕрӳллĕ паттăрсем çуралаççĕ. Нумай нациллĕ совет халăхĕн хастарлă ывăлĕсем—вырăспа грузин, украинецпа белорусс, таджикпа узбек, тутарпа чăваш, мăкшăпа мари т. ыт. те—тĕрлĕ ĕçшĕн çума-çумăн тăрса кĕрешеççĕ. Совет çĕршывне нимĕç захватчикĕсенчен сыхлас шухăш социализмлă çĕршывăн хастарлă çар çыннисене ертсе пырать. Нумай нациллĕ совет государствин патриочĕсем тимĕр стена пек пĕтĕççе тăраççĕ; çак стена çинче тăшман хăйĕн чĕрнисене хуçса пĕтерĕ.

Чăваш çĕршывĕ нимĕç захватчикĕсемпе çапăçакан хăйĕн ывăлĕсемпе мухтанма та пултарать. Чăваш халăхĕ отечественăй вăрçă фронтĕнче çапăçса наградăсем илнĕ 864 орденоносецпа тивĕçлипе мухтанма пултарать.

Чăваш çĕршывĕн ывăлĕсем усал тăшмансемпе—нимĕç империалисчĕсемпе—отечественнăй вăрçăн пур фрончĕсенче те çапăçаççĕ.

Степан Разинпа, Емельян Пугачевпа пĕрле халăх телейне кĕрешсе илес тесе çапăçнă хăйĕн паттăрĕсем çинчен хывнă калавсемпе легендăсене чăваш халăхĕ çирĕп сыхласа усрать.

Пирĕн халăх хастарлăха, паттăрлăха пахана хурать, героизма мухтаса юрлать. Анчах халăхăн героизмĕ отечественнăй вăрçăра палăрнă пек нихăçан та çавтери уççăн палăрман.

Чăваш халăхĕн ывăлĕсем совет çĕршывне сыхланă çĕрте ăста çапăçни, харсăрлăхăн тата паттăрлăхăн тĕслĕхĕсене, хăйĕн юратнă тăван çĕршывне вĕçĕмсĕр парăннин чаплă тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ.

Паттăр Севастополь хулине сыхлакансем хула çине хура пĕлĕт пек капланса килнĕ нимĕç фашисчĕсен бандисене хирĕç геройла çапăçнă кунсенче хастарлă танкистсемпе, ним хăрама пĕлмен артиллеристсемпе, чаплă хĕрлĕ пехотăпа пĕрле Сталин соколĕсем хăйсене хăйсем хĕрхенмесĕр тăшманăн полкĕсене çĕмĕрнĕ.

Тинĕс çинче вĕçекен летчиксем хушшинче хăйĕн харсăрлăхĕпе паттăрлăхĕ енчен старши лейтенант Мирон Ефимович Ефимов, Элĕк районĕнчи Самушкăн Сурăмра çуралнăскер, чапа тухнă.

Ефимов юлташ отечественнăй вăрçăра тăшманăнне аэродромсенче 17 самолет, 12 танк ытла, 200 автомашина ытла, 100 урапа ытла лаши-мĕнĕпех çĕмĕрнĕ, фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 12 пин çынна ытла вĕлернĕ.

Чаплă летчикăн хастарлăхне пит пысăка хурса, правительство ăна Совет Союз Геройĕн ятне панă. Ефимов юлташ хăй çинчен пĕр мухтанмасăр çапла çырать:

«Партипе правительство манăн, совет летчикĕн, пысăк мар ĕçне пысăккăн хакларĕç. Эпĕ пурнăçри çак чи аслă награда́на илесси çинчен нихăçан та ĕмĕтленмен.

Эпĕ уйрăмах нимĕнле паттăр ĕç те туман. Эпĕ çынсене паракан заданисенех пĕтĕм чун-чĕререн, тӳррĕн пурнăça кĕртсе пынă çеç, патронсене, юлашки патрон юлмиччен, тăшман çине тĕл персе янă.

Пемелли тĕллевсем ман умма хăйсемех тухса пынă, урăх нимĕн çинчен те шухăшламасăр, фашистла çĕлен-калтасем çине лайăхрах тĕллесе персе ӳкермелли çеç пулнă. Эпĕ заданисене пурнăçланă чухне хам çинчен нихăçан та шухăшламан, лайăхрах тĕллесе пересси çинчен тата вĕсене, ирсĕрсене, ытларах пĕтерсе тăкасси çинчен çеç шухăшланă».

Чăваш халăхĕн ывăлĕсем — Совет Союз Геройĕн ятне илнĕ летчиксем Федот Никитич Орлов (Советски районри Кĕçĕн Ямаш ялĕнчен), Борис Михайлович Васильев (Советски районри Çĕмĕртлĕх Чемей ялĕнчен) юлташсем те çакăн пекех чапа тухнă.

Федот Никитич Орлов — çамрăк та хăюллă летчик—çĕрле 142 хут вĕçсе кайса çапăçнă, тăшманăнне вуншар самолетне аэродром çинче аркатнă.

Ямаш çыннисем унпа тивĕçлипе мухтанаççĕ; унпа, совет халăхĕн паттăр соколĕпе, пĕтĕм Чăваш çĕршывĕ мухтанать.

Горькинчи автомобиль заводĕнче ĕçлекен моторист Геннадий Габайдулин отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчех Хĕрлĕ Çара хăй ирĕкĕпе каять. Вăл кунта минометчик пулать. Старая Русса районĕнчи вăрçăсенче çапăçать.

Р. хули районĕнче Габайдулинсен подразделенине тăшман çавăрса илнĕ. Габайдулинăн ултă боеца ертсе разведкăна каймалла пулнă. Вăрманта тăватă нимĕçе тĕл пулнă та вĕсене пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем хастарлă разведчиксене асăрханă та вĕсем çине миноментсенчен вăйлă вут-хĕм тăкма тытăннă. Совет разведчикĕсем геройла çапăçнă. Габайдулинăн юлташĕсем вилнĕ, вăл пĕчченех тăрса юлнă, ун патне 40 фашиста яхăн çывхарса пынă. Вĕсене çывăхах янă та Габайдулин автоматран персе пурне те пекех пĕтерсе тăкнă, тăваттăшĕ анчах тăрса юлнă. Габайдулин суранланнă, патронсем пĕтсе çитнĕ, гитлеровецсем çывăхрах пулнă. Вăл пулемет патне шуса çитнĕ те вут-хĕм сирпĕтме тытăннă, тăшмансене пĕтерсе тăкнă. Хĕрсе кайса çапăçнипе Габайдулин ун патне хыçалтан нимĕç офицерĕ йăпшăнса пынине те сисмен. Çавăрăнса пăхсан, вăл хăйĕнчен ик-виçĕ утăмра офицер пистолет тытса çĕклесе тăнине курнă. Паттăр совет воинĕ ăна, вăл персе яриччен, персе пăрахнă. Халран кайнипе Габайдулин ӳкнĕ. Часах çак вырăна пирĕн боецсем пырса çитнĕ те Габайдулина çĕклесе кайнă. Суранĕ тӳрленсен, Габайдулин каллех тăшмана çĕмĕрме кайнă. Габайдулин Комсомольски районри Тукай ялĕнчи тутар çемьинче çуралнă.

Паттăрлăхпа геройлăх кăтартнипе пула Габайдулин кăкăрĕ çинче халĕ Ленин орденĕ тата «Ылттăн çăлтăр» медалĕ йăлтăртатса тăраççĕ.

Вăрçăччен эпир çав çынсене пĕлмен. Вĕсенчен кашниех паллă мар вырăнсенче хăйсен ĕçне тунă. Анчах хăрушă сехет килсе тухсан, ĕнерхи паллă мар çынсемех чăн-чăн герой пулса тăчĕç.

Фашистсен «Аслă Германия» дивизийĕнчи пуç касакансен батальонĕ, танксем пулăшса пынипе, пирĕн часть йышăнса тăнă çĕре пырса кĕнĕ, çав çăре пирĕн земляк, комсомолец-телефонист Иван Банбурин та пулнă. Пирĕн боецсемпе командирсем тăшман çине çĕмĕрсе кĕрсе кайнă.

Иван Банбурин окопа лайăх пытанса ларнă та, тапăнса пыракан тăшмана пĕрин хыççăн теприне хăйĕн винтовкинчен пере-пере ӳкерме тытăннă. Чĕррĕн тыткăна илес тесе, тăшман ăна аякран кайса çавăрса илме шутланă. Вăл вĕсене те пере-пере ӳкернĕ. Патронсем пĕтсе çитнĕ. Банбурин сиксе тухнă та ун патне утса пыракан нимĕç обер-лейтенантне штыкпа чиксе пăрахнă.

Çак вăхăтра пирĕн боецсем хытă пырса çапнипе нимĕç захватчикĕсем хăраса ӳксе каялла тарма тытăннă. Вĕсем пăрахса хăварнă ручной пулемета ярса тытнă та, хастарлă ефрейтор кĕçĕн сержантпа Шуваевпа пĕрле нимĕçсене хыçалтан пеме тытăннă. Çакăнта тата тепĕр вунă çынна вĕлернĕ.

Çак çапăçура связист Банбурин винтовкăпа персе тата штыкпа чиксе нимĕççенне çирĕм салтакне тата пĕр офицерне вĕлернĕ.

Тепĕр совет связисчĕ Владимир Миговаров (чăваш) тăшман тупписемпе миномечĕсен вут-хĕмĕ айĕнче çыхăну линине 105 хутчен карнă, 1.430 хутчен лини пăсăлнине юсанă, тăшманăн линине 10 километр тăршшĕ пăсса тăкнă. Тăшман тылĕнче икĕ талăк хушши вирлĕн çапăçнă. Паттăр ĕçсемшĕн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденне парса наградăланă.

Чăваш халăхĕ пулемет расчечĕн командирĕ пулнă герой Иван Васильевич Смирнов (Комсомольски районри Çĕнĕ Сĕнтĕр ялĕнчен) лейтенант çинчен пĕлет, ăна яланах хисеплесе тăрĕ. Пĕр сӳлĕ вырăна тăшмантан сыхласа тăма приказ илсен, Смирнов юлташ ăна хăйĕн пулеметчикĕсемпе сыхласа тăнă. Вăл, совет геройĕ, танк гусеници айĕнче вилсе кайнă, анчах каялла чакман.

Вăл хăйĕн пурнăçне халăх телейĕшĕн, унăн ирĕклĕхĕшĕн, пирĕн çĕнтерӳшĕн пачĕ.

Пирĕн земляксем Хĕрлĕ Çарăн команда составĕпе политсоставĕ хушшинче те сахал мар.

Вĕсем, епле кĕрешмеллине хăйсем кăтартса пырса, боецсене социализмлă тăван çĕршывăн чапĕпе чысĕшĕн геройла кĕрешме хавхалантараççĕ. Политработниксенчен пирĕн халăх В. О. Осипова, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ илнĕскерне, бригаднăй комиссара Мистрюкова, «За отвагу» медальпе наградăланă старши политрука М. Н. Якимова, батальоннăй комиссара Емельян Федорович Птичкина т. ыт. те пĕлет.

Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах тăшмана хирĕç фронтра пирĕн земляк, полк командирĕ, орденоносец полковник Александров кĕрешет. Вăл Вăрмар районĕнчи Мăнçырма ялĕнче çуралнă.

Пирĕн земляк—Совет Союзĕн Геройĕ В. П. Винокуров та отечественнăй вăрçăра кĕрешет. Хăйĕн суранĕсем тӳрленсе çитиччченех вăл танк çине ларса пирĕн тăван çĕршывăн тăшманĕсене çĕмĕрме кайнă. Хальхи вăхăтра ăна майор званине панă.

Чăваш халăхĕ Вăрнар районĕнчи «Упнер» колхозри бригадирăн Антон Тихоновăн ачисене пĕлет. Вĕсенчен пĕри А. Антонов, 2-мĕш рангри техник, паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Тепĕр ывăлĕ —Н. Антонов—батальон командирĕ, И. Антонов—çар инженерĕ. Вĕсем пурте советăн хастарлă воинĕсем. Паттăрлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн Н. Антонова Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă. Мухтав çакăн пек ывăлсене ӳстерекен ашшĕпе-амăшне!

Чкаловски районри Иккĕмĕш Чкаловски шкулĕнче вĕрентнĕ учитель М. Махмутов, старши лейтенант, Хĕрлĕ Çăлтăр орденне илнĕ. Пĕррехинче вăл тăшмана пит вăйлă тĕреклетнĕ вырăнтан çĕмĕрсе кăларма приказ илнĕ. Пĕр сехет çурă—икĕ сехет хушши çапăçнă хыççăн вăл хăйĕн боецĕсемпе виçĕ противотанковăй тупă çĕмĕрсе тăкнă, фашистсенне салтаксемпе офицерсене нумай вĕлернĕ, 18 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Çирĕплетнĕ вырăна çĕлен-калтасенчен тасатнă. Пăртак вăхăт иртсен, тăшман вĕсем çине çĕнĕ резервсем янă. Гитлеровецсене çывăхах çывхарма панă та, Махмутов ручной пулеметран вăйлăн пеме тытăннă. Çав вырăнта фашистсен 60 салтакпа офицер пĕтнĕ. Тăшманăн ирĕксĕрех чакмалла пулнă.

Çакăн пек çапăçаççĕ чăваш халăхĕн ывăлĕсем хăйсен тăван çĕршывĕшĕн, социализмлă государствăшăн, тăван Чăваш çĕршывĕшĕн, чăваш халăхĕн телейĕшĕн, Октябрьти революци панă ирĕклĕхшĕн.

Октябрьти революци пулнăранпа 25 çул иртрĕ. Пире Аслă Октябрь панине пурне те фашистсем пиртен туртса илесшĕн. Çук, вăл пулаймĕ! Совет халăхĕн мĕнпур вăйĕпе шухăшĕ пĕр тĕллеве пăхăнса тăрать—тăшмана малалла кайма чармалла, каялла çавăрса пăрахмалла, ăна çĕмĕрсе тăкмалла. Çак шухăшпа пирĕн çынсем фронтра вăрçаççĕ, çак шухăшпа вĕсем тылра çĕнтерӳ хатĕрлеççĕ.

Аслă çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пыракан коммунистсен партин ялавĕ айĕнче пырса, Совет халăхĕ тăшмана çĕнтерĕ.

З. АНДРЕЕВА,

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ.

Фронта хĕçпăшалсемпе боеприпассем ытларах парса тăрар

Революциччен чăваш çĕршывĕнче промышленность пулман та темелле. Пĕтĕмпе те пĕр çу завочĕ, икĕ эрех завочĕ, темиçе арман тата Вăрманта Курбатов хуçан сĕтел-пукан фабрики пулнă. Хальхи промышленноçлă районсенче—Канашра, Çĕмĕрлере тата Куславккара—пысăкрах предприятисем пачах та пулман. Чăвашсен тĕп хулинче —Шупашкарта та хăма çуракан мастерскойсем çеç ĕçлекеленĕ. Çак вак-тĕвек предприятисенчи рабочисен хисепĕ —7 пин çынран иртмен. Çавăнпа 1913 çулта Чăваш çĕршывĕнчи промышленность, 1926—27 çулсенчи улшăнман хакпа шутласан, мĕнпурĕ те 13,1 миллион тенкĕлĕх çеç тавар туса кăларнă. Патша йĕркийĕ вак халăхсем пурăннă çĕрте промышленноçа аталантарма юриех ирĕк паман.

Совет влаçĕ çĕнтернĕ хыççăн çеç пирĕн патра производство вăйĕсем аталанма тытăнчĕç. Сталинла пилĕкçуллăхсенче Çĕмĕрлепе Куславкка комбиначĕсем, Канашра вагонсем юсакан завод шăтса çитĕнчĕç. Вĕсем хыççăн Вăрнарти фосфорит, Долгополянскри хими завочĕсем, Улатăрти гармонь фабрики, Буинскри сланец рудникĕ ĕçе кĕчĕç тата кирпĕч, крахмал, сӳс-кантăр, çу завочĕсем темиçешерĕн хутшăнчĕç. Çав вăхăтрах кивĕ предприятисене юсаса пысăклатрăмăр.

Пĕрремĕш пилĕкçуллăхра республикăри промышленноçа 34,3 миллион тенкĕ, иккĕмĕш пилĕкçуллăхра—110,6 миллион тенкĕ хывнă.

Промышленность аталаннă май, унта ĕçлекенсен хисепĕ те ӳссе пычĕ. Сахал мар чăваш çамрăкĕсемпе хĕрарăмĕсем, фабрик-заводсене ĕçлеме кĕрсе, çĕнĕ профессисене вĕренсе алла илчĕç.

Промысла тата инвалидсен кооперацийĕсене аталантарас енĕпе те укçа-тенкĕ чылай хывнă. Юлашки çулсенче çĕршер çĕнĕ мастерскойсем ĕçе кĕчĕç.

Республикăри промышленноçра уйрăмах отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Куçса килнĕ предприятисене ĕçе кĕртнĕ май тата ку таринччен ĕçлекеннисене пысăклатнă май, республикăра промышленноçăн çĕнĕ отраслĕсем хутшăнчĕç.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче фронта кайнă рабочисем вырăнне хастарлă çамрăксемпе хĕрачасем, хĕрарăмсем ĕçе кĕчĕç. Вĕсем производствăна кĕске вăхăтрах вĕренсе çитсе тухăçлă ĕçлеме пуçларĕç, чылайĕшсем стахановецсен, двухсотниксемпе трехсотниксен ретне тăчĕç. Фронт çывăхĕнчи районсенчен куçса килнĕ опытлă рабочисем, мастерсем производствăн çамрăк кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе пархатарлă ĕçлеççĕ.

Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ пирĕн рабочисемпе работницăсен ĕçри çĕкленĕвне пуçарчĕ, фронта кирлĕ продукцие туса кăларассишĕн пыракан хĕрӳ ĕç татах та вăйланчĕ.

Пĕтĕм Союзри ăмăрту Октябрь уявĕ умĕн малалла сарăлса пыни промышленноçра çĕнĕ çитĕнӳсем тума пулăшрĕ. Иртнĕ уйăхри производство программисене Н-ски завод, Канашри вагонсем юсакан завод, Куславккари комбинат, Шупашкарти пир-авăр, чăлха фабрикисем тата ытти нумай предприятисем ăнăçлăн тултарчĕç.

Пысăк заводсемпе пĕрлех апат-çимĕç тата вырăнти промышленноçсен предприятийĕсем лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç, промысла кооперацийĕсен артелĕсем те хăйсен ĕçне вăрçă вăхăчĕ хушнă пек хăвăртлатса пыраççĕ.

Пирĕн промышленность умĕнче халĕ питех те пысăк задачăсем тăраççĕ. Чи малтанах, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе, малашне татах та тухăçлăрах ĕçлемелле тăвас пулать. Çапла майпа мĕнпур предприятисен коллективĕсене кăçалхи юлашки квартал планне тултарассишĕн кĕрешĕве мобилизацилес пулать.

Д. ДУБИНИН,

ВКП(б) Обкомĕн промышленность отделĕн заведующийĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: **А. Т. Тимофеева** юлташ—Красноармейски районри Войков ячĕпе тăракан колхоз членĕ. Тылра вăя шеллемесĕр ĕçленĕшĕн ăна «За трудовую доблесть» медальпе наградăланă.

ЮРАТАТĂП ЭПĔ ТĂВАН ÇĔРШЫВА

Пуçран пĕр шухăш нихçан та тухма пĕлмест. Çав шухăш вăл боевой заданисене пурнăçа кĕртсе килнĕ хыççăн кăшт сывлăш çавăрнă чухне те, сывлăшра тăватă моторлă хăватлă карапа вĕçсе пынă чухне те, ку çеç те мар, чи йывăр самантсем килсе тухнă чухне те хĕлхем пек çиçсе илет:—кам, мĕн пулнă пулăттăм-ши эпĕ, революци, Совет влаçĕ пулман пулсан? Мана Совет влаçĕ кăна ăмăрт-кайăккăнинчен те хăватлăрах çунатсем пачĕ-çке-ха. Шухăшлатăп та, куç умне иртнĕ кунсем килсе тухаççĕ.

Эпĕ Советски районри Мăн Пакăш ялсоветне кĕрекен Кĕçĕн Ямаш ялĕнче 1913 çулта çуралнă. Чи чухăн çын ывăлĕ. Аттене пачах курман. Вăл эпĕ пĕчĕк чухнех вилнĕ. Тăлăх. Ачаш курмасăрах пурăнма лекнĕ. Ыйткаласа çÿренисене, кĕтÿ кĕтнисене эпĕ халĕ те манмастăп. Выçă пурнăçпа нумай ыйткаласа çÿренĕ. Хамăр таврари ялсене—тухĕрри Чаканарсене, вăрманти Кăмашасене, уйри Мăн Вылăсене, çырмаллă Анат-Сăнарсене, улăхри Улăх-Кассисене пĕтĕмпех çÿресе çавăрăннă. Кашни пÿрте кĕрсе тухнă. Хама-хам шутласа халь те вăтанатăп. Чăн та, ыйткаласа çÿрени вăрă туни мар, теççĕ. Анчах никамран та нимĕнле хисеп те пулман. Ыра кăмăллă çынсем манăн выçăпа хăрса кайнă алă çине пĕр чĕлĕ çăкăр е вĕри çĕрулми хурса паратчĕç. Теприсем, куштанраххисем, эпир вĕсен чÿречисем патнелле утса пынине курсан, кантăкĕсене шалтлаттарса хупса лартатчĕç. Эпĕ хам ытлашши пĕчĕкçĕ пулнă пирки Ямаш ялĕнчи суккăр Ульянана çавăтса çÿреттĕм. Пыратăн çавăн пек утса, лайăх çурт куратăн, шалта темĕнле тутлă апатсем çисе ларассăн туйăнать. Çиеççĕ те пуль, кам пĕлет... Çуртăн чÿречисем питĕ çÿлте. Унта çитсе шалта мĕн пуррине курма çук. Эсĕ мĕскĕн сасăпа паян пурăнмалăх пĕр татăк çăкăр ыйтсан, сана е ятласа пăрахаççĕ, е кантăка уçса мăшкăлшăн çăкăр вырăнне кăмака чулĕ пăрахса параççĕ, е тата картышĕнчи хаяр йыттине сăнчăртан вĕçертсе, пирĕн çине вĕслетеççĕ.

Якур пиччепе иккĕн кĕтÿ пăхса çÿрени нихçан та асăмран тухмасть. Хучаш ялĕн, Мăн Этменĕн, хамăр ялăн уйхирĕсенче, — паянхи пекех астăватăп,—яланах уйра сыснасемпе, сурăхсемпе каласса çÿреттĕм. Çуркунне, çĕршыв типсе çитсен, уя тухса каятăн та, кĕркунне кăна—татти-сыпписĕр çăмăр çуса, юр ÿкме пуçласан, яла, пÿрте кĕретĕн. Ача чухне уйрăмах çулла йывăрччĕ: кун вăрăм, каçĕ питĕ кĕске. Кăнтăрла выльăхсемпе кунĕпе чупса ывăнатăн та, ирхине татах ирех тăрас пулать. Сывлăм ÿкнĕ улăх тăрăх çара уран чупатăн. Урасем чĕпĕленсе, çурканса пĕтнĕ. Çав вăхăтра хĕвел тухать. Питĕ хитре. Петĕрсен хурăнĕ урлă хĕвел хăйĕн ылттăн урипе Ямаш енчи анасем çине пуссан, эпĕ вăрăм пушăна хулпуççи çине çакатăп та, Микитасен пралукĕпе выльăхсене хăваласа, икĕ сăрт хушшипе хирелле тухса каятăп. Ирçинче вара хăвна-хăвах нумай пурăнас килет тĕнчере. Мăн çын пек пулса, çĕр çине çирĕппĕн пусса утса пыратăн. Питĕ хитре ирçинче. Тĕнче илемлĕ, йăлтăртатса çеç тăрать. Çÿлте тăри юрлать, таçтан инçетрен карăш сасси илтĕнет. Анчах сана никам та пĕлмест. Пĕр выльăхсем çеç, сана пĕлнĕ пек пулса, сан хуйăхна туйнă пек пулса, мăшăлтатса çисе çÿреççĕ.

Çÿлелле пăхатăн. Унта, çÿлте-çÿлте, хăлат хăйĕн сарлака çуначĕсене сарса ирĕклĕн ярăнса çÿрет. Вĕçен кайăк пуласчĕ те инçете-инçете вĕçсе каясчĕ тесе шухăшлатăн. Тупасчĕ хăвăн телейна. Ăçта-ши вăл? Мĕншĕн çунатсем çук-ши? Ун чухне хальхи пек çунатлă пуласси çинчен тĕлĕкре те тĕлленмен.

Халĕ те манмастăп праçниксене, çимĕксене иртернисене. Çынсен ачисем лайăх çипуççем тăхăнса, хуткупăссемпе, урам тăрăх хĕрачасемпе çуйăхкаласа, Шăмат еннелле, çимĕк курма, Омашне вăрманĕсем витĕр, пĕрне-пĕри ăмăртса юрăсем юрласа каяççĕ. Эсĕ пур, тăхăнма нимĕн те çук пирки, выçлăтутлă пулса, çынсем çимĕке кайнисене карта хушăкĕ витĕр пăхса юлатăн. Хăш чухне хăвăн пурнăçу çине тарăхнине пула куççулĕсем юхса анаççĕ.

Пĕччеех хурланса çÿретĕн вара çапла. Нимĕн тума аптăранипе витре илсе, урам урлă çырмана çăл шывĕ ăсма каятăн. Çимĕкрен ăш хыпса таврăнакан ачасене сивĕ шыв ĕçтерсен мана та лайăх пек туйăнать. Эпĕ те вара çимĕке кайса килнĕ пек пулса, шыв ĕçтернĕшĕн кăмăллă ачасем тав туса парсан, хĕвелçăвăрнăш кататăп.

Мăнкунсенче чуччу ярăнаççĕ. Эпĕ вара нихçан та чуччу çине тăрса ярăнман, мĕншĕн тесен, веçех çĕтĕк-çатăк—чуччу çине тăма майĕ те çук. Тата чуччу çине тăрсан та санпа пĕрле никам та тăмасть. Е çăварнире. Ялти ача-пăча савăнса, пĕр-пĕрин патне кĕрсе хăналанса çÿреççĕ. Санăн та çÿрес килет, анчах санăн нимĕн те çук. Хăшĕ-пĕрисем санпа каласма та тиркеççĕ.

Эпĕ яш-кĕрĕм пулсан та хам ятпа çĕлетнĕ тумтир тăхăнса курман. Яланах çĕтĕк-çатăк, выçлă-тутлă пурăннă. Сивĕ пулсан та, выçă пулсан та, инçе пулсан та вĕренме хĕлле те пурпĕрех çÿреттĕмччĕ. Вĕренес килет. Кĕркунне тырă пуçтарса, авăн çапса пĕтерсен, аран-аран çутатакан шăши куçлă краççин çутипе кĕнеке вулаççă ларатăн. Урам хушшинче ачасем юрласа çÿреççĕ. Санăн та вĕсемпе пĕрле пулас килет. Хăш чухне вулани те пуçа кĕмест, ху вуланине ху та ăнланаймастăн. Вулатăн—шухăш урамра. Ача чунĕ-çке-ха, юн вылятех. Темиçе хут вуласа тухатăн, çапах нимĕн те ăнланмастăн. Вара çав юрласа çÿрекен ачасем çине тарăхса, татах та хытăрах вулама тытăнатăн. Хăçан та пулин пирĕн урамра та праçник пулĕ-ха тесе ĕмĕтленсе хăвна-ху пусаратăн.

Тăван çĕршыв тăлăх ачан асапĕсене тăван анне пек туйса илчĕ. Вăл мана ÿстерсе çын турĕ. Чăваш ачине малалла кайма аслă та çутă çул уçса пачĕ.

Юрататăп эпĕ тăван çĕршыва, хамăрăн чăваш халăхне, хам çуралнă яла, мана вĕрентнĕ учительсене, пĕрле вĕреннĕ юлташсене. Пĕтĕм чун-чĕререн юрататăп эпĕ совет влаçне, Сталин конституцине, Сталин аттене. Мана совет влаçĕ çитĕнтерсе çунатсем пачĕ. Елĕк тăлăх ача пулнăскер, кĕтÿç ачи, тĕттĕм чăваш ачи—халĕ летчик-командир, Совет Союзĕн Геройĕ.

Эпĕ самолетпа 8 çул хушши вĕçетĕп. Çак сакăр çул хушшинче нумай курмалла пулчĕ. Тăван çĕршыва сĕмсĕррĕн хапăрнакан тăшмансене хирĕç Хасанра, Халхин-Голра çапăçма тÿрĕ килчĕ. Белофинсемпе те вăрçрăм. Эстонире, Латвире, Литвара, Бессарабире пултăм. Хăш чухне шутласа ларсан хăвăнтан ху тĕлĕнетĕн. Пĕтĕм Кавказа урлă та пирлĕ вĕçсе каçрăм, Хура тинсĕрен пуçласа Мурманск патне çитиччен кашни яла тенĕ пекех веçех паллатăп. Байкал кÿлли урлă, Вăтам Ази урлă, Ташкентăн-мĕнĕн талккишĕпех вĕçсе тухрăм. Памирăн шурă пĕлĕтрен те çÿле каякан хысакĕ урлă темиçе хутчен те вĕçсе каçма тÿрĕ килчĕ. Тинĕсрен пуçласа тинĕсе çитиччен выртать манăн çул—чăваш ачин çулĕ. Кара-Кум пушхирĕнче, нихçан та çын пулман çĕрте пултăм эпĕ—чăваш ачи.

Хамăрăн Чăваш республики урлă та вĕçсе каçрăм. Хамăн тăван ял патĕнче анса лартăм. Мана пĕрле ÿснĕ, пĕрле вĕреннĕ юлташсем, чи çывăх тăвансем пек, çавăрса илчĕç. Самолет кабининчен тухсан, куçа эпĕ вăрăм пушă сĕтĕрсе, çара уран утса çÿренĕ уйхирсем курăнса кайрĕç. Тăван çĕршыв пĕтĕмпех улшăннă. Йăрансăр уйхирте тырпул тинĕс пек хумханса выртать. Хăлхана хирте ĕçлекен хĕрсем юрланă сасă илтĕнсе кайрĕ. Акă, çак вырăнта çÿренĕ эпĕ. Çÿлте çăмăллăн ярăнса вĕçекен кайăксем çине пăхнă, ют çынсен хама хăнăхса çитнĕ выльăх-чĕрлĕхĕпе калаçнă. Чăн та, самолетран тухса, йĕри-тавра çавăрăнса пăхсан, манăн кăкăра темĕн тулса килчĕ. Пĕрре ĕлĕкхи асаплă тăлăх пурнăçа аса илнипе, тепре хальхине курса савăннипе кĕçех куççулĕ шăпăрах юхса анатчĕ...

Ман сире пĕтĕмпе каласа пама майĕ те çук. Пурне те пĕрле шутласан, 500 пин çухрăм ытла сывлăшра вĕçсе çÿрерĕм эпĕ—чăваш ачи. Хăш чухне 17 сехет хушши пĕр анмасăр сывлăшра пулнă. Эпĕ 6 тĕрлĕ самолет çинче вĕçме пултаратăп. Мухтанса мар, тĕрĕссине, тăван çĕршыва тав туса калатăп. Хальхи вăхăтра 4 моторлă сывлăш карапĕ çинче вĕçетĕп.

Манăн учителĕм тата командирăм—Гастелло. Эпĕ унпа пĕрле ĕçленĕ. Ăна командовани урăх назначени парсан, вăл хăйĕн самолетне мана халаларĕ. Отряда командир пулса ертсе пырасси те ман çине кусрĕ. Çапла, Гастелло самолечĕпе халĕ эпĕ вĕçетĕп. Эсир Гастелло çинчен пĕлме кирлĕ. Вăл пĕрремĕш герой. Вăрçă тухсанах, 1941 çулхи июль уйăхĕнче, Гастелло нимĕç танкĕсен колонни çине бомбăсем пăрахма кайсан, ăна тăшманăн снарячĕ пырса тивнĕ те, унăн самолечĕ çунма тытăннă. Гастелло, çунаканскер, хăйĕн самолетне, хăйне-хăй шеллемесĕр, танксен колонни çине çапăнтарнă. Хăй те çунса кайнă, анчах хăйпе пĕрле нумай танксене пĕтерсе, бензин цистернисене сирпĕнтерсе янă. Гастеллопа вĕçнĕ ĕлĕкхи юлташĕсем халĕ манпа вĕçеççĕ. Эпир Гастелло вилĕмĕшĕн тăшмана хаяррăн тавăрма тупа тунă, эпир тавăратпăр тăшмана. Эпир тăшмана пĕр хĕрхенмесĕр аркататпăр, çапла пирĕн çĕршывăн чаплă геройĕн вилĕмсĕр ятне чыслатпăр.

Гастелло ячĕ пире ним курăнман тĕттĕм çĕрсенче çутă çăлтăр пек çул кăтартса пырать. Чи йывăр самантсенче Гастелло ячĕ çăмăллăх кÿрет, чĕре вăйĕ пĕтсе çитсен—чĕрене вăй парать, хĕллехи шартлама сивĕсенче ал-урана тăм илме тытăнсан—юна вĕрилентерсе ăшăтать, ывăнса çитсе куç курми пулсан—Гастелло чĕрин çулăмĕ куçа уçать, вара татах та татах шыратăн тăшманăн йăвине, тупатăн ăна—аркататăн. Вилĕм куç умне тухса тăрсан та Гастеллăн вилĕмсĕр ячĕ вилĕмрен çăлса хăварать. Ĕмĕр чап та мухтав ăна, аслă героя!

Эпĕ хам йывăр бомбардировщиксен отрячĕн командирĕ. Вăрçă тухсанах, 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче хамăрăн çĕршывшăн, хамăрăн халăхсемшĕн, хамăр çĕршыва сыхласа хăварассишĕн, хамăрăн телее, кунçула, чыслăха, ирĕклĕхе, пире çын тунă тивлете хÿтĕлесе хăварассишĕн эпĕ нимĕçсене хирĕç вăрçма тытăнтăм. Тупнă телее тăшмана памалла мар! Çапла тупа турăмăр эпир. Халĕ ĕнтĕ ирсĕр тăшманпа 16 уйăх хушши çапăçатăп. Çав вунултă уйăх хушшинче эпĕ тăшмана нумай сиен турăм, нумай нимĕçсене леш тĕнчене ăсатрăм. Эпĕ хамăн юлташсемпе пĕрле нимĕçсенне 93 самолет çунтарса ятăм. Танксемпе автомашинăсене 60 ытла пĕтертĕм. Нумай складсем çунтарса ятăм, нумай вагонсем, паровозсем, çар грузĕсем—бензин, боеприпассем турттарса пыракан эшелонсене сирпĕнтерсе ятăм. Тăшманăн чылай хулисене аркатрăм, чугунçул кĕперĕсене, шыв урлă хывнă каçăсене, батарейăсене сывлăшалла çĕклерĕм. Пире чура тума хапсăнакан тăшмана эпĕ пĕрре те шеллесе тăмарăм. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене мĕн чухлĕ вĕлерсе пĕтернине эпĕ шутламан. Тен, пĕр пин те ытла пулĕ. Çапла пĕрре вĕçсе кайсан кăна эпĕ 132 нимĕç офицерне пĕтертĕм.

Пĕтĕмпе каласа тухма та йывăр. Ыттине вăрçă пĕтсен калаçăпăр. Çакнашкал ĕнтĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, манăн ку вăрçăри ĕççем. Халĕ хăвăрах шутлăр: эпĕ вĕсене çавăн чухлĕ пĕтермен пулсан, мĕнле вăй пулнă пулĕччĕ вăл пире хирĕç! Нимĕçсене эпĕ татах та нумайрах пĕтерме тăрăшăп.

Эпĕ хамăн хăватлă карапăмпа 142 хутчен боевой вĕçевре пулнă. Вăтамран шутласан, нимĕçсен пуçĕсем çине 300 тонна ытла бомба пăрахнă.

Çитменнине тата эпĕ 142 хутĕнче те çĕрле вĕçнĕ. Кăнтăрла маншăн пулсан нимĕн те мар. Çĕрле вĕçме йывăр. Нимĕн те курăнмасть. Çапах шыраса тупас пулать тăшманăн йăвине. Çĕрле вĕçме пур летчиксем те мар пултараççĕ. Ятарласа вĕренес пулать. Каçхине кайăк та вĕçмест — пултараймасть, вĕçевçĕсем вĕçеççĕ.

Йывăрри нумай пулнă. Темиçе хутчен те вилĕмпе куçа-куçăн тăнă. Эсĕ вĕçсе пынă чухне, пурте сана тĕллесе тупăсемпе, пулеметсемпе переççĕ. Хăш чухне снарядсемпе пульăсем сан çумранах иртсе каяççĕ е пĕр-пĕр снарячĕ çурăлса та каять. Е прожекторсемпе хĕссе илсе переççĕ. Темĕнле хытă переççĕ пулсан та, темĕнле йывăр вилĕм çывăхрах пулсан та, çавах задание яланах пурнăçа кĕртнĕ.

Эпĕ сире пур эпизодсене те каласа параймăп.

Çапла, мана пĕр аэродрома бомбăсем пăрахса аркатма задани пачĕç. Эпĕ хамăн карапăмпа çĕрле вĕçсе кайрăм. Фашистсен аэродромĕ патне çитнĕ чухне мана 9 прожектор хĕссе илчĕ. Куçа вăйлă çутă касать, приборсем çине пăхма та çук. Анчах эпĕ тытнă çулран пăрăнмарăм, тÿрех аэродром тĕлне вĕçсе пытăм. Ман йĕри-тавра çутатакан пульăсем çиçеççĕ, вĕсем пурте ман ÿте шыраççĕ. Çывăхрах снарядсем çурăлаçурăла каяççĕ. Хăвăн моторусем ĕçлени те илтĕнмест. Манăн экипаж çĕрелле бомбăсем тăкать, тупăпа, пулеметпа перет. Аялта пушарсем хыпăнса илчĕç—фашистсен самолечĕсем çунаççĕ. Анчах пĕр снаряд ман карапăн пĕр моторне тÿрех лекрĕ те, мотор ĕçлеми пулчĕ. Çав вăхăтрах тата пульăсем икĕ ура хушшипе штурвал çумĕнчен тухса кайрĕç. Ман реглан (пальто) витĕр шăтарса тухрĕç, анчах та хама сĕртĕнмерĕç. Самолет пĕр моторĕ пăсăлнă пирки аялалла анма тытăнчĕ. Темĕнле йывăр пулсан та, эпĕ хамăр еннеллех таврăнма тăрăшрăм. Çапах та хамăрăн аэродрома вĕçсе çитеймерĕм. Фронт линийĕнчен 8 километр хамăр енне каçса, хамăн аманнă карапăма çĕрле, нимĕн çĕмĕрмесĕр, уй варрине антарса лартрăм. Самолета юсама çак вырăнта пĕр талăк ытла ĕçлемелле пулчĕ. Нимĕçсем хайхи çавна сиссе тупăпа, миномётсемпе пеме пуçларĕç. Темĕнле хытă печĕç пулсан та, çавах машинăна юсаса çитерсе, хамăрăн аэродрома вĕçсе кайрăм. Çак каçхине эпир тăшманăнне 7 самолет çунтарса янă.

Экипаж черетлĕ вĕçеве тухма хатĕр. Улăпла пысăк карап вăрмантан анлă площадка çине ерипен шуса тухать. Экипажăн членĕсем хăйсен вырăнĕсене йышăнаççĕ. Стрелоксем пулеметсене тĕрĕслеççĕ; борт-радист рацие йĕркелет; борт-техниксем винтсемпе моторсене тĕрĕслесе пĕтерчĕç, бомбăсем вырнаçтарнă люксене пăхса тухрĕç, листовкăсем тултарнă михĕсене меллĕрех вырнаçтарчĕç.

Сигнал ракети. Йывăр тиенĕ машина çаврăнса нимĕн курăнми уй тăрăх чупса кайрĕ. Çĕртен уйăрăлсан, вĕтлĕх вăрман çийĕпе аялтан вĕçсе, ерипен çĕкленсе пырса, хĕвеланăçнелле, фронт урлă, тăшманăн тылне çул тытрăмăр. Пирĕн пĕрремĕш задани—тăшманăн Р. пунктĕнчи аэродромне çапса аркатасси.

Пăч тĕттĕм. Анчах кайран, эпир çитес çĕре çитнĕ чухне уйăх тухмалла, вăл пире аэродрома тупма пулăшмалла.

Çамрăк штурман Милостивенко карапăн çулне кăтартса пырать. Вăл 46 хутчен çапла çĕрле çул кăтартса пынă, анчах нихçан та çулран аташман.

Вăл тек-текех компаспа карттă çине пăхса пырать. Вăхăта, хăвăртлăха, самолет мĕн чухлĕ çÿлте пынине тĕрĕслет. Унтан вăл курс линейки çинчи пĕр пункта хыттăн шаккать:

— Ы-ых, ирсĕрсем!—тет вăл.

Аялта, тĕттĕм çĕре çурса çулăм ялтлатса хыпăнса илни курăнса каять. Татах, унтан татах. Фронт линийĕ. Ку вăл пирĕн артиллери хăйĕн çĕрлехи ĕçне тăвать, çĕре чавса выртнă тăшмана хире-хире килать.

Уйăх çути вăйсăр. Вăл ноябрь каçĕн тĕттĕмлĕхне çĕнтерейместь.

— Тĕллев патне çитесси тăхăр минута юлать,—тесе пĕлтерет штурман.

Эпир çывхарса пынине тăшман сисет. Тĕттĕм пĕлĕте прожектор çути вăрăм çĕçĕ пек çурса каять. Кĕрен те хĕрлĕ çиçĕмсем çиçме тытăнаççĕ. Анчах çутатакан пульăсем те, прожекторсем те пирĕн самолета тĕттĕмре хыпашласа тупаймаççĕ.

Эпир цель çийĕнче, 1000 метр çÿллĕшĕнче. Пирĕн айра хула хĕрри, кунта—аэродром. Унта—пирĕн мирлĕ хуласемпе ялсене аркатма хатĕрленсе ларнă çăхансем.

Милостивенко бомбăсем тăкма тытăнать. Пирĕн «кавăнсем» пĕрин хыççăн тепри аялалла вăркăнаççĕ, машина ерипен чĕтренсе илет.

Çĕр çинче хура çулăмсем хыпăнаççĕ, унтан çуталса, ÿссе пыраççĕ. Тăшманăн самолечĕсем çунаççĕ. Вĕсем хăйсене хăйсем çутатса пире лайăх курма май параççĕ. Ултă самолет хыпăнса илнĕ.

Çак каçхине эпир тăшман çине тăватă хутчен вĕçсе кайма шут тытрăмăр. Ачасем манăн маттур, ывăнма пĕлмеççĕ. Нимĕçе мĕн чухлĕ ытларах хĕнеççĕ, манăн паттăрсем те çавăн чухлĕ хастарланса пыраççĕ. Хамăрăн аэродром çинче пире самолета черетлĕ вĕçеве тухма часах хатĕрлесе çитерсе параççĕ.

Çапла эпир пĕр каçра тăватă хутчен тăватă тĕле вĕçсе кайса тăшмана аркатрăмăр. Ирхине пирĕн часăн командованийĕ пирĕн ĕç çинчен малтанхи хыпарсене илнĕ. Эпир çав каçхине тăшманăнне 30 самолет таран пĕтерсе тăкнă, ангарсене çунтарса янă, самолетсем лармалли площадкăсене тарăннăн сухаласа пĕтернĕ.

Çапла пĕр каçра тăшмана вишшер-тăватшар хутчен тапăннисем сахал мар пулнă.

Пĕринче тата, юханшыв урлă каçма хатĕрленсе, пухăнса тăнă тăшмана нимĕн юлмиччен çапса аркатнă хыççăн, хамăрăн аэродром çине таврăнтăм та ларма шутлаттăм. Анчах ларма май çук. Йĕри-таврах, аэродромран инçех те мар, тăшманăн самолечĕсем вĕçеççĕ. Эпĕ кунта анса ларсан, тăшман хама та курса илет, хамăрăн çĕр çинче пытанса тăракан машинăсемшĕн те ырă мар ĕç тăватăп. Тăшман кунта пирĕн аэродром пуррине асăрхаса илме пултарать.

Эпĕ вара аэродромран аяккарах вĕçсе кайса, ăçта та пулин урăх вырăна анса ларма шут тытрăм. Анчах кĕрхи каç часах йĕп чиксен те курăнми тĕттĕмленсе çитрĕ. Çитменнине тата пĕтĕм тавралăха йывăр пĕлĕт хупăрласа тăрать. Эпĕ анма тытăнтăм, çĕр хăвăрт çывхарса пырать, анчах пĕлĕтсем ăшĕнчен тухма çук. Кун пек чухне шуйттан пуçĕ çине пырса тăрăнма пулать. Самолета татах çÿлелле çĕклерĕм. Мĕн тăвас? Наставлени тăрăх командир кун пек чухне çапла та тума пултарать: экипажа парашютсемпе сикме приказ парать те, юлашкинчен хăй те парашютпа сикет, унтан вара машинăна ÿксе çĕмĕрĕлме тăлăха хăварать. Анчах манăн юратнă учитель Гастелло пиллесе хăварнă машинăна, боевой ĕçре нихçан та улталаман чи çывăх туса епле çавăн пек тăвас-ха, епле ÿксе çĕмĕрĕлме тăлăха хăваратăн-ха ăна? Çук, апла тума юрамасть.

Пуçра сасартăк пĕр шухăш çуралчĕ.

— Сикме хатĕрленĕр!—терĕм эпĕ хамăн юлташсене.—Çĕр çине анса çитсен, самолета лартмалăх вырăн хăвăрт шыраса тупăр та, мĕн те пулин çутса паллăсем лартăр.

Юлташсем мана часах ăнланчĕç. Вĕсем пĕрин хыççăн тепри тĕттĕмелле шăвăна-шăвăна анчĕç. Эпĕ çав вырăн тĕлĕнче темиçе хут çавăрăнса илтĕм. Горючи тепĕр темиçе минутăлăха кăна çитет. Акă аялта çутăсем курăнса кайрĕç. Тек сывлăшра пĕр минута та тытăнса тăма юрамасть. Эпĕ çунакан çутăсем тĕлнелле анма тытăнтăм. Ялкăшса çунакан пĕрремĕш кĕлте патĕнче ман машинăн урапусем çĕре тиврĕç те тепĕр кĕлте патне çитесси икĕ утăм юлсан машина чарăнчĕ. Моторсем те ĕçлеме пăрахрĕç—баксенче бензин пĕр тумлам та юлман. Çапла «У—2» самолет кăна анса ларма пултаракан тăвăр вырăна эпĕ хамăн тăватă моторлă карапа анса лартăм. Юлашки кĕлтерен висĕ утăм лерелле таран вар пулнă.

Çапла вара экипажа та, машинăна та çăлса хăварма пултартăм.

Нимĕçсем пĕр вырăнта наступлени пуçласа ярас тесе, танксемпе машинăсем нумай пухса тăратнă. Мана вĕсен планне çĕмĕрме задани пачĕç. Уйрăмăн илсен, манăн пĕр станцине пырса çитнĕ бензин цистернисен эшелонне çунтарса ямалла пулнă. Эпĕ, яланхи пекех бомбăсем çĕклесе, çав станцине аркатма вĕçсе кайрăм. Унта мана тăшман кăмăллă мар кĕтсе илчĕ. Анчах нимĕçсем темĕнле урса кайса печĕç пулсан та, эпĕ задание çапах пурнăçа кĕртрĕм, çав эшелона пĕтĕмпех çунтарса аркатрăм, питĕ вăйлă пушарсем турăм, тата хăрамалла çÿлте вĕçрĕм, анчах çĕр çинчи пушарсенчен машина ăшĕнче те çап-çутă пулчĕ. Ирччĕнех çунчĕ нимĕç моторĕсен юнĕпе чунĕ. Эпĕ бензина çунтарса яннипе пула, пирĕн пехотинецсем нимĕçсен горючисĕр тăрса юлнă танкĕсне 60 таран тытса илчĕç. Питĕ лайăх ĕç пулчĕ.

Пире хирĕç вăрçма пĕр вырăна Испани салтакĕсене («Голубая дивизия» тенкенскерне) илсе пынă пулнă. Кăнтăрла нумай утса ывăннăскерсене, вĕсене пĕр ялта канма вырнаçтарнă. Вĕсем çывăрма выртнă. Вот мана çакă нимĕçсемшĕн кĕрĕшсе вăрçакансене «аса вĕрентме» задани пачĕç. Вĕсем пире пачах та кĕтмен, ĕшеннĕ хыççăн вĕсем пурте тутлă ыйăха путнă. Эпĕ вара вĕсене ыйăхран вăратма, унтан ют çĕр çинче мĕнле çывăрса çÿремеллине вĕрентме вĕçсе кайрăм. Ку ялта нимĕн те юлмарĕ, веçех аркатрăм. Чылай вăхăт вĕçсе çÿресе çав йĕксĕк тарçăсене хамăн мĕн-пур пулеметсенчен вутпа шăвартăм. Кĕтмен хăнасемшĕн тăхлан çăмах хĕрхенсе тăмарăм. Карланкă выçă пулсан, çийĕр, тăранăр, терĕм. Тарăхатăн-çке-ха! Мĕн шырама килнĕ вĕсем пирĕн çĕр çине? Ялта нумай пушарсем пулчĕç. Ку салтаксенчен хăшĕ-пĕрисем, çийĕнчех вилейменнисем, йĕмĕсене тăхăнмасăрах туха-туха чупнă. Аннраса кайнипе хăш еннелле тармаллине пĕлмесĕр, нумайĕшĕсем пирĕн боецсем тăракан çĕре вăркăннă. Тыткăна лекнисем нумай пулчĕç. Çапла вара «Сенкер те кăвак дивизирен» шăмми-шакки кăна тăрса юлчĕ. Ку ĕçшĕн мана командовани мухтарĕ. Хамăрăн генерал тав турĕ. Пĕлместĕп, «кăвак дивизин» генералĕ питĕ ылханчĕ пулмалла.

Акă тата тепĕр картина. 1941 çулхи декабрь уйăхĕ. Н. хулинче нимĕç офицерĕсем раштав тума шутланă. Çав майпа вĕсем культура дворецне пуçтарăнса банкет тума тытăннă. Паллах, вĕсен ĕçмелли те, çимелли те çителĕклех пулнă. Офицерсем вĕт! Вĕсен сĕтелĕсем çинче пĕр япала кăна çитмен—вырăссен «тăварлă хăярĕ». Банкет çинчен пире партизансем систерчĕç. Эпĕ хамăн «хăярсене» çакрăм та вĕçсе кайрăм хайхи. Тивĕçлĕ çурта часах шыраса тупрăм. Палланă хула-çке-ха! Офицерсем ĕçнĕ, шавланă пулмалла. Эпĕ çав çуртăн тимĕр çийĕ витĕр офицерсен раштав сĕтелĕ çине «хăярсем» тăкма тытăнтăм.

— Мейĕр, çийĕр!

Паллах, çуртран нимĕн те юлмарĕ. Çав каçхине вара, партизансем каласа панă тăрăх, эпĕ 132 офицера леш тĕнчене ăсатнă. Пĕр сăмахпа каласан, нимĕçсем лайăх ĕçсе-çирĕç, лайăх апатланчĕç, ирхине мухмăр чĕртес шухăш та пулмарĕ. Вĕсен мухмăрне «вырăс хăярĕ» каçах уçса пачĕ. Питĕ лайăх ĕç пулчĕ вара.

Çырмалли татах та нумай. 142 хут çĕрле вĕçнĕ çĕрте кашнинчех тĕлĕнмелле ĕçсем пулнă. Пурне те çырса тухма вăхăт çук, ĕçе васкас пулать.

Хĕлле çапла мана пĕр аэродрома аркатма хушрĕç. 45 градуслă сивĕре 5 сехет вĕçрĕм. Çавах задание пурнăçа кĕртрĕм. Нимĕçсенне ку каçхине 6 самолет пĕтертĕм. Анчах хамăн алăсене те тăм илчĕ, питсене, ура тупанĕсене тăм илсе ячĕ. Тÿсме çук сивĕ! Утмастăн, ларса пыратăн-çке-ха. 5 кун чирлесе выртмалла пулчĕ,—ни утаймастăп, ни алăсемпе нимĕн те тытаймастăп. Çав каçхине манăн иккĕмĕш летчикăн сылтăм куçне пачах тăм илсе ячĕ. Мĕн тăвас тетĕн, вăрçă инкексĕр пулмасть.

Тепрехинче командованин ответлă заданине пурнăçлама вĕçсе кайсан, çантăлăк йĕркесĕр начар пулнă пирки, манăн карап сывлăшра пăрланма тытăнчĕ, алла пăхăнми пулчĕ. Винтсем çинчен катăлса сирпĕнекен пăр катăкĕсем пĕтĕм пите çĕмĕрсе пĕтерчĕç. Куçсем юнпала хупланаççĕ, анчах çапах та задание пурнăçа кĕртсе, чиперех таврăнса, машинăна йĕркеллĕн антарса лартрăм. Экипажа та, карапăма та çăлса хăвартăм.

Каласмалли нумай. Ыттисене вăрçă пĕтсен калаçăпăр.

Мĕнле вĕçмеллисене, мĕнле бомбăсем пăрахмаллисене, мĕнле йывăр пулнисене хăварах чухлама тивĕçлĕ. Анчах çапах та, çапах та задание пурнăçа кĕртмесĕр çурма-çулран нихçан та каялла таврăнман.

Мана Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ, Совнаркомпа Обком салам ячĕç. Çакăн çине эпĕ çапла ответлетĕп: тăшмана пĕтерсе тăкиччен çапăп, чĕре тапма чарăниччен, юлашки юн тумламĕ юлмиччен, юлашки сывлăш тухиччен çапăçăп нимĕç оккупанчĕсене хирĕç. Нимĕç самолечĕсемпе танкĕсен ванчăкĕн купине, фрицсемпе ганссен вилĕ купине кунран-кун ытларах ÿстерсе пырăп. Хамăр çĕршывшăн, хамăр халăхшăн, хамăн телейлĕ пурнăçшăн!

Эпĕ тăван çĕршыва юрататăп, ăна нихçан та, никама та памăп. Эпĕ Гастелло геройăн ячĕпе тупа тăватăп.

Чăваш халăхĕн маншăн хĕрелмелле пулмĕ. Анчах манăн сăмах çапла: мĕнпур çынсем, пĕчиккинчен пуçласа пысăкки патне çитиччен, фронтшăн ĕçлечĕр, çапла ĕçлесе ирсĕр нимĕçе хăвăртрах пĕтерер. Вара вăрçă пĕтсен курса калаçăпăр. Вара ун чухне орденлă Чăваш республикин халăхĕ лайăх ĕçлерĕ тесе пурте калаччăр.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумне, Чăваш АССР Совнаркомĕпе Обкомне, мĕнпур чăваш халăхне Аслă Октябрь уявĕн ячĕпе фронтран пысăк та хĕрÿллĕ салам!

Совет Союзĕн Геройĕ капитан Ф. ОРЛОВ.



Пирĕн паттăр земляк Федот Никитич Орлов хăйĕн çапăçури тусĕсемпе пĕрле. • УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Совет Союзĕн Геройĕсем — капитансем В. Погорелов, Ф. Орлов тата П. Марютин.

Октябрьти социализмлă Аслă революци XXV çул тултарни

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. СТАЛИН юлташ Ĕçсынни Депутачĕсен Мускав Совечĕн Мускав хулинчи партиллĕ тата обществăллă организацисемпе пĕрле 1942 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче пулнă чаплă ларăвĕнче тунă доклад

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

тăрассине пĕтерсе тăкасси; нацисен пĕр танлăхĕшĕн тата вĕсен территорийĕсене никам пырса тĕкĕнмелле марришĕн тăрасси; чуралăха кĕрсе ӳкнĕ нацисене ирĕке кăларасси тата вĕсен тивĕçлĕ прависене ура çине тăратасси; кашни нацине хăйсем кăмăлланă пек йĕркеленме право парасси; хĕнхур тӳснĕ нацисене экономика тĕлĕшĕнчен пулăшасси тата вĕсене материальнăй ырлăх тăвас тĕлĕшпе пулăшасси; демократиллĕ ирĕклĕхсене ура çине тăратасси; гитлерла режима пĕтерсе тăкасси пулса тăрать.

Италипе Германи коалицийĕн ĕç программи çакăн патне илсе çитерчĕ: Европăри оккупациленĕ çĕршывсем—Норвеги, Дания, Бельгия, Голландия, Франция, Польша, Чехословакия, Югославия, Греция, ССР Союзĕн оккупациленĕ облаçĕсем—Италипе Германи тиранийĕ çине хаяр курайманлăхпа пăхаççĕ, нимĕçсемпе вĕсен союзникĕсене мĕнле пултарнă çавăн пек сăтăрлаççĕ, хăйсем тӳсекен мĕнпур мăшкăлсемпе пусмăрлăхшăн хăйсене чуралантаракансене тавăрма майлă самант çитессине кăна кĕтсе тăраççĕ.

Çакна май хальхи самантăн паллă енĕсенчен пĕри çакăнта пулса тăрать: Италипе Германи коалицине пĕччене тăратса хăварасси прогрессивлăн ӳссе пырать тата унăн Европăри моралльлĕ-политикăллă резервĕсем пĕтсе пыраççĕ, çав коалици вăйсăрланса арканса пырать.

Англипе Совет Союзĕ тата Америка коалицийĕн ĕç программи çакăн патне илсе пычĕ: Европăри оккупациленĕ мĕнпур çĕршывсем çав коалицин членĕсем çине пĕтĕм чун-чĕререн кăмăлласа пăхаççĕ тата вĕсене хăйсем мĕнле пулăшу пама пултарнă таран кирек хăш енĕпе те пулăшма хатĕр тăраççĕ.

Çакна май хальхи самантăн тепĕр паллă енĕ çакăнта пулать: çар коалицин моралльлĕ-политикăллă резервĕсем Европăра, тата Европăра кăна мар, кунран-кун ӳссе пыраççĕ,—çав коалици тавра унпа пĕрле пулса, гитлерла тирание хирĕç çапăçма хатĕр тăракан, çав коалицие кăмăллакан миллионшар çынсем ытларах та ытларах пухăнса пыраççĕ.

Икĕ коалицин вăйсем мĕн чухлĕ пулнине çынсемпе материальнăй ресурссем тĕлĕшпе илсе пăхсан, çак вывод патне пымасăр тăма май çук: кунта эпир пĕр иккĕленмесĕрех Англипе Совет Союзĕ тата Америка коалицийĕ маларах тăнине куратпăр.

Анчах çакăн пек ыйту пур: çĕнтерӳ тума вăйсем енчен çакăн пек малта тăни кăна çителĕклĕ-и-ха? Çакăн пек те пулкалать: ресурссем нумай, анчах вĕсене çавтери тăрлавсăр расходлаççĕ, çавна пула вăйсем тĕлĕшпе маларах тăнинчен нимĕн те юлмасть. Çакă паллă, ресурссемсĕр пуçне, çав ресурссене мобилизацилеме пултарни тата вĕсене тĕрĕс расходлама пĕлни кирлĕ. Англипе Совет Союзĕ тата Америка коалицийĕнчи çынсен çавăн пек пĕлӳ пурри пирки тата çавăн пек пултарулăх пурри пирки иккĕленме пулать-и-ха? Çакăн пирки иккĕленекен çынсем пур. Мĕнле сăлтава пула вĕсем иккĕленеççĕ-ха? Çав коалицири çынсем хăйсен вăхăтĕнче хăйсен çĕршывĕсен ресурсĕсене мобилизацилеме, çав ресурссене хуçалăхпа культурăллă-политикăллă строительство енĕпе тĕрĕс расходлама пĕлнине тата пултарнине кăтартса панăç. Ыйтăв килет: хуçалăхпа культурăллă-политикăллă тĕллевсем енĕпе ресурссене мобилизацилесе тата валеçсе йĕркелесе ĕçре пултарулăхпа пĕлӳлĕх кăтартнă çынсем вăрçăри тĕллевсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çав ĕçсенех туса ирттерме пултараймĕç тесе иккĕленме мĕнле сăлтав пур-ха? Эпĕ çавнашкал сăлтавсем çук тесе шутлатăп. Англипе Совет Союзĕ тата Америка коалицийĕн çĕнтерӳ тума пур шанчăксем те пур тата, асăв коалицие вăйсăрлатма, ишĕлтерсе яма пултаракан пĕр çитменлĕх пулман пулсан, вăл тĕрĕссипех çĕнтернĕ пулĕччĕ, теççĕ. Çав çынсен шучĕпе çав çитменлĕх çакăнта пулса тăрать: çав коалици тĕрлĕ йышши элементсенчен, пĕр пек мар идеологилĕскерсенчен тытăнса тăрать, çак обстоятельство вара вĕсене пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç пĕрле тăрса кĕрешес ĕçе организацилеме май памасть пулать.

Çакăн пек çирĕплетсе калани тĕрĕс мар, тесе шутлатăп эпĕ.

Англипе Совет Союзĕн тата Америкăн коалицийĕн составне кĕрекен государствăсен идеологиллĕ тата обществăллă стройĕнче уйрăмлăх пуррине хирĕçлени кулăшла пулнă пулĕччĕ. Анчах çакă вара вăл коалицин членĕсене чуралантарас хăрушлăха илсе килекен пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç çав коалици членĕсем пĕрле кĕрешни усăллине тата пулма пултарассине хирĕçлет-и-ха? Паллах, хирĕçлемест. Унтан та ытларах,—этемлĕх тискерлĕх тата вăтам ĕмĕрти ирсĕр ĕçсем патне таврăнассинчен хăтарас тесе пĕрле кĕрешме çав тухса тăнă хăрушлăх коалици членĕсене çирĕппĕнех хушать. Англипе Совет Союзĕ тата Америка коалицин ĕç программи çине таянса гитлерла тирание хирĕç пĕрле кĕрешессине организацилеме тата вăл тиранине çĕнтерме çав программа çителĕклĕ мар-и вара? Çителĕклех, тесе шутлатăп эпĕ.

Çав çынсем шухăшланине иртнĕ çулти событисем пĕтĕмĕшпех сирсе пăрахнă пирки те вĕсен шухăшĕ тĕрĕс мар. Чăнах та, вăл çынсем тĕрĕс пулас пулсан, эпир Англипе Совет Союзĕ тата Америка коалици членĕсем пĕрпĕринчен прогрессивлă ютшăнса пынине курнă пулăттăмăр. Анчах эпир çакна курмастпăр кăна мар, пачах урăхла, эпир Англипе Совет Союзĕ тата Америка коалицийĕн членĕсем прогрессивлă çывхарса пыни çинчен тата вĕсем пĕр боевой союза пĕрлешни çинчен калакан фактсемпе событисене куратпăр. Иртнĕ çулти событисем çавна тӳрремĕнех çирĕплетсе параççĕ. 1941 çулти июль уйăхĕнче, Германи ССР Союзĕ çине тапăннă хыççăн темиçе эрне иртсен, Англия пирĕнпе «Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕрле кĕрешесси çинчен» килĕшӳ турĕ. Ун чухне çак тĕлĕшпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе пирĕн хушăра нимĕнле килĕшӳсем те пулман-ха. Çакăн хыççăн 10 уйăх иртсен, 1942 çулти майăн 26-мĕшĕнче Молотов юлташ Англире пулнă вăхăтра, Англие пирĕнпе «гитлерла Германие тата Европăри унпа пĕр каварлисене хирĕç пыракан вăрçăра союз тăвасси çинчен тата вăрçă хыççăн тусла пурăнса пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен» договор турĕ. Çак договора 20 çуллăха тунă. Вăл договор пирĕн çĕршывпа Англи хушшинчи çыхăнусенче историллĕ çаврăну пулнине пĕлтерет. 1942 çулти июнь уйăхĕнче, Молотов юлташ США-ра пулнă вăхăтра, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем пирĕнпе «агрессие хирĕç пыракан вăрçăра пĕрпĕрне пулăшмалли принципсем çинчен килĕшӳ» туса алă пусрĕç, çак килĕшӳ ССР Союзĕпе США хушшинчи çыхăнусенче малалла утăм туни пулса тăрать. Юлашкинчен çак паха факта та, Великобританин премьер-министрĕ господин Черчилль Мускавра пулнине те палăртмалла, вăл Мускавра пулнă чухне икĕ çĕршывăн руководителĕсем пĕрпĕрне пĕтĕмĕшпех ăнланнине палăртнă. Нимĕн иккĕленмелли те çук, çак фактсем пурте ССР Союзĕ, Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем прогрессивлă çывхарса пыни çинчен тата вĕсем Италипе Германи коалицине хирĕç боевой союза пĕрлешни çинчен калаççĕ.

Курăнать ĕнтĕ, япаласен логики кирек мĕнле урăх логикăран та вăйлăрах.

Вывод пĕрре кăна: Англипе Совет Союзĕ тата Америка коалицийĕн Италипе Германи коалицине çĕнтерме пур шанчăксем те пур тата вăл пурпĕрех çĕнтерет.

5. Пирĕн задачăсем

Вăрçă мĕнпур витĕнчĕксене сирсе пăрахрĕ тата пур çыхăнусене те уçăмлăн палăртрĕ. Лару-тăру çавтери уççăн палăрчĕ, çавăнпа та çак вăрçăри пирĕн задачăсене паллă тăвасси питех те çăмăл.

Турци генералĕпе Эркилетпа калаçнă хăйĕн калаçăвĕнче, Турцири «Джунмхуриет» ятлă хаçатра пичетлесе кăларнă скерĕнче, çынçиен Гитлер çапла калать: «Эпир Российăна пĕтерсе тăкатпăр, вăл урăх нихăçан та çĕкленме ан пултартăр», тет. Ухмахларах пулин те, ăнланмалла пек туйăнать. (КУЛАÇÇĔ). Германие пĕтерсе тăкас задача пирĕн çук, мĕншĕн тесен Российăна пĕтерсе тăкма çукки пекех, Германие те пĕтерсе тăкма çук. Анчах гитлерла государствăна пĕтерсе тăкма пулать тата пĕтерсе тăкмалла та. (ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Пирĕн пĕрремĕш задача—гитлерла государствăпа ăна хавхалантарса пыракансене пĕтерсе тăкасси пулать те ĕнтĕ. (ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Çав генералпа калаçнă чухнех çынçиен Гитлер малалла çапла калать: «Эпир вăрçа Российăра организациленнĕ çар вăйĕ юлмиччене туса пырăпăр», тет. Ассăртарах пулин те, ăнланмалла пек туйăнать. (КУЛАÇÇĔ). Германири организациленнĕ кирек мĕнле çар вăйне те пĕтерсе тăкас задача пирĕн çук, мĕншĕн тесен чухлакан çын кирек кам та çакна ăнланать: çав задачăна Германи тĕлĕшпе те, çавăн пекех Россия тĕлĕшпе те пурнăçа кĕртме май çук кăна мар, тата, çĕнтерекене усăллă пултăр тесен, ăна пурнăçа кĕртни кирлĕ те мар. Анчах гитлерла çара пĕтерсе тăкма пулать тата пĕтерсе тăкмалла та. (ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Пирĕн иккĕмĕш задача—гитлерла çарпа унăн руководителĕсене пĕтерсе тăкасси пулать те ĕнтĕ. (ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Гитлерла мерзавецсем советăн тыткăна лекнĕ çыннисене асаплантарассине, вĕсене çĕршерĕн вĕлерессине, пиншер çынна выçăхтарса вĕлерессине йăла туса хунă. Вĕсем пирĕн çĕршывăн оккупациленĕ территоринчи гражданăла халăха, арçынсемпе хĕрарăмсене, ачасемпе стариксене, пирĕн шăллăмсемпе йăмăксене асаплантараççĕ, вĕлереççĕ. Вĕсем Украина, Белорусси, Прибалтика, Молдави, Крым, Кавказ халăхĕсене чуралантарас е вĕлерсе пĕтерес тĕллев лартнă. Этем тивĕçлĕхне çухатнă тата выльăхсем таранах чакнă ирсĕр çынсем виселицăсемпе тата концентрациллĕ лагерьсемпе тултарчĕç. Вĕсем «заложниксен» ирсĕр системине ĕçе кĕртрĕç. Вĕсем пĕр айăпсăр граждансенех «залога илесçĕ те» хĕрарăмсене ирĕксĕрлесе мăшкăллама е çынсене çаратма нимĕçсен мĕнле те пулин выльăхне чарнăшăн персе тата çакса вĕлереççĕ. Вĕсем Евсемпе пӳтсĕрсем кăна пĕр айăпсăр тата хĕçпăшалсăр çынсем тĕлĕшпе çавăн пек ирсĕр ĕçсем тума пултараççĕ. Анчах ку пурте мар-ха. Вĕсем Европăна ропăна халăхсен тĕрми туса хучĕç. Çакна вара вĕсем «Европăри çĕнĕ йĕрке» тесе ят панă. Çак йĕркесĕрлĕхсемшĕн айăплисене, «Европăри çĕнĕ йĕркене» тăвакансене, çав çĕнĕрен пиçсе тухнă мĕнпур генерал-губернаторсене тата губернаторсене, комендантсемпе подкомендантсене эпир пĕлетпĕр. Асаплантарса пĕтернĕ вуншар пин çынсемшĕн вĕсен ячĕсем паллă. Хăйсен преступленийĕсемшĕн ответ тытассинчен вĕсем хăтăлас çуккине тата асап курнă халăхсен хаяр аллинчен вĕçерĕнес çуккине çав палачсем пĕлсе тăччăр.

Пирĕн виççĕмĕш задача — «Европăри çĕнĕ йĕркене», çав ылханлă йĕркене çĕмĕрсе тăкасси тата ăна тăвакансене ответ тыттарасси пулса тăрать.

Çакăн пек пирĕн задачăсем. (ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Юлташсем! Эпир ирĕклĕхшĕн аслă вăрçă туса пыратпăр. Эпир ăна пĕччен мар, хамăрăн союзниксемпе пĕрле туса пыратпăр. Вăл вăрçăра эпир этемлĕхĕн ирсĕр тăшмансене, нимĕçсен фашистла империалисчĕсене çĕнтеретпĕр. Çав вăрçă ялавĕ çине çапла çырнă:

АНГЛИПЕ СОВЕТ СОЮЗĔН ТАТА АМЕРИКĂН БОЕВОЙ СОЮЗĔ ÇĔНТЕРЕССИ СЫВĂ ПУЛТĂР! (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

ЕВРОПĂРИ ХАЛĂХСЕНЕ ГИТЛЕРЛА ТИРАНИРЕН ИРĔКЕ КĂЛАРАССИ СЫВĂ ПУЛТĂР! (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

ПИРĔН МУХТАВЛĂ ТĂВАН СОВЕТ ÇĔРШЫВĔН ИРĔКЛĔХĔПЕ НИКАМА ПĂХĂНМАНЛĂХĔ СЫВĂ ПУЛТĂР! (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

НИМĔÇСЕН ФАШИСТЛА ЗАХВАТЧИКĔСЕНЕ, ВĔСЕН ГОСУДАРСТВИНЕ, ВĔСЕН ÇАРНЕ, ВĔСЕН «ЕВРОПĂРИ ÇĔНĔ ЙĔРКИНЕ»—ЫЛХАВ ТА ВИЛĔМ! (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

ПИРĔН ХĔРЛĔ ÇАРА—МУХТАВ! (ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

ПИРĔН ТИНĔС-ÇАР ФЛОТНЕ—МУХТАВ! (ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

ПИРĔН ПАРТИЗАНСЕМПЕ ПАРТИЗАНКĂСЕНЕ—МУХТАВ! (ТĂВАЛЛĂН НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ. ПУРТЕ УРА ÇИНЕ ТĂРАÇÇĔ, ПĔТĔМ ЗАЛ ОВАЦИ ТĂВАТЬ).

Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнă ятпа ютçĕршывсенчи политикăллă тата обществăллă деятельсем Совет Союзне саламлани

Англия

ЛОНДОН, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнă ятпа Англири политикăллă тата обществăллă паллă деятельсем совет халăхне саламсем янă.

ЛОРД БИВЕРБУРК

Вырăс халăхĕ паттăррăн утса тухнă жертвăсемпе чăтăмлăхăн çулĕ этемлĕхĕн малашлăхне туса йĕркелеме хатĕрлесе май пачĕ. Эпир çав геройла халăхран мĕнпур чун-чĕререн тĕлĕнсе савăнатпăр. Вырăссем туса пыракан кĕрешӳве хамăр енчен пур майсемпе те, пур средствăсемпе те пулăшас тени мĕнтери пысăк! Пирĕн мĕнпур вăйсем пĕтĕмĕшлĕ тăшманпа татăклă çапăçура тĕл пуличчен Англи халăхĕн пĕр пайĕ те, пĕр политикăллă шухăш та çырлахма пултараймасть. Пирĕн пĕтĕмĕшлĕ ĕçшĕн Росcия вăхăтпа ăнăçлăн усă курса юлчĕ. Вăл çавтери пысăк вăй хурса тата çухатусем тӳссе тăвакан çĕнтерӳ мĕнпур союзниксен ылханлă тăшмана хирĕç пыракан,—çав тăшманпа кирек ăçта тĕл пулсан та,—хаяр çапăçусенчи тĕллевĕ пулса тăма тивĕçлĕ.

АНГЛИ ПАРЛАМЕНЧĔН ЧЛЕНĔ ЛЕЙБОРИСТ Д. Н. ПРИТТ

Совет Союзĕнчи халăхсем геройла саманара пурăнаççĕ. Çак самана вăл вĕсен паттăрлăхне пула, вĕсен чăтăмлăхне пула тата вĕсем хăйсен пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр кĕрешнине пула çавăн пек геройла самана пулса тăчĕ. Вĕсем пĕтĕм тĕнчене çакна кăтартса пачĕç: рабочисемпе хресченсен классăр государстви асапсем тӳссе ирттерме, кĕрешме, халиччен нихăш çĕршывра та арçынсемпе хĕрарăмсем ун чухлĕ ĕçлемен пек ĕçлеме пултарать; большевиксем çĕнтереймен йывăрлăхсемпе чăрмавсем тĕнчере çук. Вĕсем хăйсен союзникĕсене — Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англие мухтавлă пример кăтартса пачĕç. США-па Англи тăшмана хирĕç тухас ĕçре вăрахăн çаврăнкалаççĕ-ха. Вĕсен тĕллевĕсем — пĕтĕмĕшлĕ йывăрлăхсемпе жертвăсен, кĕрешӳпе триумфăн хăйсене тивĕçлĕ тӳпине хăйсем çине илесси пулса тăрать. Англипе Америка халăхĕсем умĕнче питех те пысăк ответлăх тăрать, вĕсен правительствисем кĕтсе ларма пăрахчăр тесен тата хăйсен обязательствисене вăхăтра та пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртсе пыччăр тесен, Англипе Америка халăхĕсем мĕн кирлине пурне те тума тивĕçлĕ.

ВЕЛИКОБРИТАНИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔН СЕКРЕТАРĔ ГАРРИ ПОЛЛИТ

Вырăссен революцийĕ 25 çул тултарнă кун Англи халăхĕ Совет Союзĕ çине пăхасси тĕпренех улшăннине палăртма пулать. Çакă вăл тĕнче историйĕнче халиччен пулман çирĕплĕхрен тата харпăрхăйĕн пурнăçне хĕрхенмесĕр кĕрешнинчен тĕлĕнсе савăннипе кăна чарăнса тăмасть. Çынсем çине тăрсах çапла ыйтаççĕ: «Вырăссен мĕнле уйрăм пахалăх, урăх нимĕнле халăхăн та çук пек пахалăх пур?» теççĕ. Çак ыйтусем вĕсем Англи халăхĕ Совет Союзĕнчи йĕркесемпе чĕррĕн интересленнине кăтартса параççĕ. Мĕнпур тĕнчешĕн çакă паллă пулса тăрать: ĕççыннисем обществăна урăхлатса йĕркелеме кăна мар, вĕсем çавăн пекех тата хăйсен революцийĕн çитĕнĕвĕсемпе çĕнтерĕвĕсене çирĕппĕн тăрса хӳтĕлеме, çапла вара мĕнпур тĕнчери прогресс ĕçне çĕнĕ вăй кӳме пултараççĕ. Англи халăхĕ Совет Союзĕ çинчен мĕнле те пулин ытларах пĕлме пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшать, гитлеровецсене çапса аркатас вăхăта çывхартас тĕлĕшпе Совет Союзĕ тунипе танлаштарсан, Англия питех те сахал тунишĕн Англи халăхĕ хăй тарăхнине палăртать. Халăхра çак шухăш ӳссе пырать: Европăра иккĕмĕш фронт уçнă пулсан, Гитлера 1942 çултах пуçĕпех çапса аркатма пулатчĕ, тесе шухăшлать халăх. Çак туйăмсем ӳссех пырассине эпĕ шанса тăратăп.

Коммунистсен партийĕн ячĕпе эпĕ Англипе ССР Союзĕнчи халăхсене пĕрпĕринпе Союзлă пулса çывăхарах тăмалла тăвас тесе, çак икĕ çĕршыври халăхсем хушшинче савăл çапса кĕртме тăрăшакан фашистла элементсен тата вĕсемпе пĕр каварлисен мĕнпур хăтланăвĕсене аркатса тăкас тесе, мĕн кирлине пурне те тума сăмах паратăп.

Чехословакия

ЧЕХОСЛОВАКИН ЮТÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔ ЯН МАССАРИК

ЛОНДОН, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословаки халăхĕ тата эпир, Чехословакин Лондонри правительствин членĕсем, Октябрьти революци XXV çул тултарнă кун хамăрăн аслă союзниксем çинчен — вырăссем çинчен ырă кăмăлпа тав туса шухăшлатпăр. Вырăс революцийĕн çитĕнĕвĕсене унăн хальхи результачĕсем тăрăх пăхсан уйрăмах лайăх ăнланса илме пулать, çав результатсем вĕсен чăннипех те питĕ чаплă. Сталинграда хӳтĕлени вăрçăсен историйĕнче хăйне май пĕртен-пĕр çĕнĕ те чаплă событи пулса тăрать. Вырăс салтакĕ хăйĕн пурнăçне хĕрхенмесĕр геройла кĕрешни пурне те çакна лайăх кăтартса парать: вăл аслă идейăшăн кĕрешет, çав идейăшăн вилме те хатĕр. Сталинградшăн çапăçни — вăл аслă вырăс халăхĕн хăватне чысласа лартнă аслă памятник пулса тăрать. Эпĕ çакна шанса тăратăп: Совет территорийĕ çинчен юлашки нимĕçе сирсе ывăтас кун çитесси, е тата, кунтан та лайăхраххи, çав нимĕç çĕршывран туха тариччен ăна вĕлерес кун çитесси инçе мар ĕнтĕ. Эпир, Российăн кĕçĕн союзникĕсем, Российăна пур енĕпе те пулăшу пама кирлине ăнланатпăр. Çав пулăшу ăна кирлĕ, паллах, çакна ăна аслă союзниксем те ăнланса илеççĕ. Чăн та, тĕрлĕ йывăрлăхсем пур, анчах вĕсене çĕнтерĕпĕр. Кĕтекен кун çывхарса килет, эпир уншăн пурте пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме, кĕрешме, пурăнма, кирлĕ пулсан вилме те хатĕр. Эпĕ аслă вырăс халăхĕ умĕнче пуç таятăп.

Польша

ПОЛЬШĂН ЮТÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔ ЭДУАРД РАЧИНСКИЙ

ЛОНДОН, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрьти революци 25 çул тултарнă ятпа эпĕ Совет Союзне Германи захватчикне çĕнтерме мĕнпур чун-чĕререн сунатăп. Германи захватчикĕн варвăрла усал ĕçĕсем çине пĕтĕм тĕнчери цивилизациллĕ нацисем йĕрĕнсе те кураймасăр пăхаççĕ. Польша халăхĕ Хĕрлĕ Çарпа ССР Союзĕнчи халăхсен геройла ĕçĕсене тĕлĕнсе те савăнса сăнаса тăрать. Германи агрессорĕпе алла хĕçпăшал тытса чи малтан тытăçса ӳкнĕ Польша халăхĕ, Германи агрессорне хирĕç кĕрешме нихăçан та пăрахман. Польша халăхĕ пĕрлешнĕ нацисем пĕтĕмĕшлĕ тăшмана çĕнтерессине, çав çĕнтерӳ мĕнпур халăхсене мирлĕн те ирĕклĕн пурăнма аслă право парассине пĕтĕм чун-чĕререн ĕненсе шанса тăрать.

Швеция

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире «Советньют» хаçатăн черетлĕ номерĕ тухнă. Ăна пĕтĕмĕшпех Октябрьти аслă революци XXV çул тултарнă ятпа кăларнă. Унта историллĕ уяв ячĕпе совет халăхне янă чылай саламсем пичетленнĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 5-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 5-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче, Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре çапăçнă. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 5 танкне, вăйскăсемпе грузсем турттарса пыракан 30 автомашинине тата горючи тултарнă 4 автоцистернине пĕтерсе тăкнă, артиллерин 5 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче çаплах хаяр çапăçусем пынă. Противник, çапăçăва хăйĕн резервĕсене кĕртсе ярса, пирĕн позицисене темиçе хутчен те атакăланă. Пирĕн боецсемпе командирсем гитлеровецсен атакисене пурне те сирсе янă, тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 800 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

Хула защитникĕсем тăшмана хирĕç хăйсене хĕрхенмесĕр кĕрешнин тĕслĕхне кăтартаççĕ. Нимĕçсен пехотин икĕ роти пирĕн юнашр тăракан подразделенисен хушшинче кĕрсе кайма хăтланнă. Совет саперĕсем вуннăн, Павлов лейтенант ертсе пынипе, автоматсемпе пеме пуçланă та нимĕçсен çулне картласа лартнă. Çав çапăçура красноармеец Дудников юлташ нимĕçсен офицерне вĕлернĕ те унăн автоматне ярса илнĕ, çав автоматпа персе 16 гитлеровеца вĕлерсе тăкнă. Красноармеец Цунников юлташ 15 нимĕçе вĕлернĕ. Мина ванчăкĕсем Цунников юлташа амантнă, унăн винтовкине çĕмĕрсе пăрахнă. Вара вăл пĕр вĕлернĕ нимĕçĕн винтовкине ярса илнĕ те татах 8 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Красноармееца Костюченко юлташа сылтăм хулран амантнă. Вăл гранатăсен çĕррисене шăлпа çыртса хыва-хыва илсе гранатăсене фашистсем çине сулахай аллипе вăркăнтарса тăнă. Çав çапăçура вунă геройран виççĕшĕ паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Чĕрĕ юлнисем хăйсем йышăнса тăнă позицирен çапăçу пĕтиччен тухман, нимĕçсене çул паман. Пирĕн боецсем вуннăн 87 гитлеровеца вĕлерсе тăкнă, противникăн пулемечĕсемпе миномечĕсен 5 точкине пĕтерсе лартнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсем йышăнса тăракан позицисене çирĕплетнĕ, тăшман çине тупăсемпе персе тăнă. Н-ски чаçри артиллеристсем противникăн 5 блиндажне, 2 наблюдательнăй пунктне ишĕлтерсе антарнă тата нимĕçсен пехотине 2 взвод вĕлерсе пĕтернĕ. Гварди сержанчĕсен Гарковецпа Федин расчечĕсем тăшманăн 6 кĕпçеллĕ минометне пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен продовольстви складне ишĕлтерсе антарнă.

* * *

Нальчикри кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре совет войскисем противникăн пысăк вăйĕсемпе хĕрӳллĕн çапăçнă. Пирĕн войскăсен тылне кĕрсе кайнă нимĕç автоматчикĕсен танковăй десантне Н-ски часть пĕтерсе тăкнă. 100 гитлеровеца çити вакласа пĕтернĕ, 4 танк тата 8 автомашина çĕмĕрнĕ. Артиллеристсемпе минометчиксем атака тума хатĕрленсе пĕр вырăна пухăннă нимĕçсене персе, вĕсене салатса янă, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна ытла вĕлерсе тăкнă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем активлăн çапăçса пăртак малалла кайнă. Нимĕçсем контратакăсем тума хăтланнă, анчах та вĕсене тупăсемпе тата минометсемпе персе сапаласа янă. Н-ски чаçăн боецĕсем Безымянная высота районĕнче противникăн пехотине пĕр батальон вĕлерсе тăкнă, çав высотана йышăнса илнĕ.

* * *

Новороссийскран хĕвелтухăçнерехре пирĕн боецсем противник йышăнса тăнă хутора çавăрса илнĕ. Нимĕçсен гарнизонĕ унка татса тухма хăтланнă, анчах вĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă. 60 гитлеровеца вĕлернĕ 12 станковăй тата 2 ручной пулемет, 5 автомат, 30 винтовка тата боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Орел облаçĕнче кĕрешекен партизансен ушкăнĕ противникăн чугунçул тăрăх пыракан 3 эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав крушенире 3 паровоз, 22 вагон, 36 платформа тата горючи тултарнă 5 цистерна çĕмĕрĕлсе кайнă. 7 оруди, 12 танк тата ытти çар грузĕ нумай пĕтнĕ. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 130 çын вилнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Смоленск облаçĕнчи Орловка ялĕн халăхне темĕн те пĕр усал кăтартса пĕтернĕ. Октябрĕн 26-мĕшĕнче Орловка ялне нимĕçсен салтакĕсемпе жандармĕсен отрячĕ пырса кĕнĕ. Гитлерла бандитсем 3 кун хушши çав яла çаратнă, ирсĕр ĕçсем тунă. Вĕсем темиçе çемьери çынсене пурне те вакласа тăкнă, ача амăшĕсене 6 çынна тата вĕсен кăкăр ĕмекен ачисене те чĕррĕн çунтарса янă. Фашистла вăрă-хурахсем колхозниксен пĕтĕм продовольствине, урана тăхăнмаллисене тата тумтирсене йăлтах туртса илнĕ.

Актив парти историне вĕренет

ПЕРВОМАЙСКОЕ, ноябрĕн 5-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Эпир Аслă Чемен ялĕнче парти историне вĕренмелли кружок организацилерĕмĕр. Унта ял активĕ — колхозсен председателĕсем, ялсовет исполкомĕнче ĕçлекенсем, учительсем—пурĕ 25 çын ытла çӳреççĕ. Кружокăн уйăхра 4 заняти пулса иртет. Ку таринччен икĕ заняти ирттернĕ: пĕринче «ВКП(б) историйĕн Кĕске курсĕн» 6-мĕш главине вĕреннĕ, иккĕмĕшĕнче — хальхи лару-тăру çинчен доклад итленĕ.

И. МИТРОФАНОВ.
Кружок руководителĕ.

Англичансен Египетри наступленийĕ

12 кун хушшинчи çапăçусен итогĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Каирта ятарласа кăларнă коммюникере çапла каланă: хĕвеланăçĕнчи пушхирте Англин тип çĕр çинчи тата сывлăшри вăйĕсем тăшмана ĕнтĕ 12 кун хушши пĕр чарăнмасăр атакăлаççĕ. Германипе Итали войскисем пĕтĕм фрончĕпе каялла чакаççĕ. Противникăн ним йĕркисĕр чакакан войскисен колоннисене Англи войскисен тип çĕр çинчи тата сывлăшри вăйĕсем татти-сыпписĕр атакăласа пыраççĕ. Хыпарсем тăрăх, Роммель Германие кайнă вăхăтра ун вырăнне фон-Штумм генерал юлнă пулнă. Фон-Штумм генерала вĕлернĕ. Ку таранччен 9 пин çынна ытла тыткăна илнĕ, вăл шутра Германин Африкăри корпусĕн командующийĕ генерал фон-Тома тата Германипе Италин ытти пысăк офицерĕсем чылай пур. Алла илнĕ даннăйсем тăрăх, противникăн вилсе пĕтнĕ е аманнă салтакĕсемпе офицерĕсен хисепĕ питех те пысăк. Ку таринччен нимĕçсемпе итальянецсен 260 ытла танкне пĕтерсе тăкнă тата 270 орудирен кая мар тытса илнĕ е пĕтерсе тăкнă. Тытса илнĕ трофейăсене тĕплĕн шутласа тухма халлĕхе май та çук. Çав 12 кун хушшинче пулса иртнĕ операцисенче сывлăшри çапăçура тăшманăн 300 самолетне ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ тата аэродромсем çинче те çавăн чухлех пĕтерсе тăкнă е сиенлесе стройран кăларнă. Тинĕс-çар тата сывлăш-çар вăйĕсем тăшманăн суднисене пĕтĕмпе 50 пин тонна водоизмещенилĕх путарнă тата тĕнĕл держависен Çурçĕр Африкăри войскисем валли кирлĕ япаласем турттарса тăракан суднисене те çавăн чухлех сиенленĕ. Саккăрмĕш арми çаплах наступлени туса пырать.

АМЕРИКА ВОЙСКИСЕМ ПАЛЕСТИНĂНА ТАТА СИРИЕ ÇИТНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Палестинăна тата Сирие Америка войскисем пырса çитнĕ.

ВУЛАКАНСЕНЕ

«Чăваш Коммуни» хаçатăн çитес номерĕ ноябрĕн 10-мĕшĕнче тухать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОН СЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 978 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.